Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрь 29 ытларикун № 253 (9162)

Хакĕ 20 пус. 36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Парти вĕренĕвĕн ăнăçлăхĕ пропагандистран килет

Пирĕн коммунистсем, интеллигенци, ертсе пыракан кадрсем тĕнчере чи малта тăракан наукăна — марксизм-ленинизма кружоксемпе шкулсенче тата харпăр хăй тĕллĕн вĕренсе алла илеççĕ. Марксистла-ленинла вĕренĕве организацилес ĕçре пропагандист пысăк вырăн йышăнать.

Парти пропагандистсене ответлă ĕç шанса панă. Вĕсем массăсем хушшинче марксистла-ленинла теори аслă идейисене сарма, кадрсене общество аталанăвĕн законĕсемпе, коммунизмла общество тума вĕрентекен наукăпа хĕçпăшаллантарма тивĕç.

Парти пропагандист умне пысăк требованисем лартать. Унăн ĕçĕнче теорине начетчикла, догматикла, цитатăсем вуласа паниле вĕрентни пулмалла мар. Пропагандистăн марксистла-ленинла теорине творчествăлла ăнланса илмелле, унăн положенийĕсемпе пурнăçра усă курма пĕлмелле, вĕсене партипе правительство лартнă задачăсемпе çыхăнтарса памалла.

Юлашки çулсенче пирĕн республикари парторганизацисем пропагандистсен яланхи çирĕп кадрне тунă. Пропагандистсен йышĕ пахалăх тĕлĕшĕнчен лайăхланчĕ. Вĕсем хушшинче аслă шкул пĕтернисен шучĕ ӳсрĕ, нумайăшĕ КПСС обкомĕ çумĕнчи курссенче, васкан партшкулсенче вĕренĕ. Пропаганда ĕçне партипе совет органĕсене ертсе пыракансем чылай хутшăнаççĕ.

Анчах лайăх руководительсем политшкулсемпе кружоксенче пуринче те çук-ха. Партин хăшпĕр райкомĕсемпе хула комитечĕсем пропагандистсене суйласа илес ĕç çине çиелтен пăхнă, вĕсен шутне пĕтĕмĕшле пĕлӳ сахал иннисене, теори тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр хатĕрленнисене кĕртнĕ.

Парти вĕренĕвне йĕркелесси пропагандистсем суйласа илнипех пĕтмест-ха. Парторганизацисен задачи пропагандистсемпе куллен ĕçлесси пулать: вĕсене пур енĕпе те ĕçлĕ пулăшу пани, вĕсен теорилле пĕлĕвĕсене тата методикăлла ăсталăхне ӳстерни, вĕсен ӳсĕмĕшĕн тăрăшни кирлĕ.

Пропагандистсемпе ĕçлемелли майсенчен пĕри вăл семинарсем пулаççĕ. Вĕсен ĕçĕнче марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене, партипе правительствăн решенийĕсене вĕренесси, теорипе методика ыйтăвĕсене активлăн сӳтсе явасси, пĕр-пĕрин пахо опычĕпе паллашасси тĕп вырăнта пулмалла. Семинарсенче партипе совет работникĕсен, промышленноçпа ялхуçалăхĕнчи, суту-илӳ ĕçĕнчи специалистсен докладчĕсене тăтăшах итлемелле.

Парти организацийĕсен задачи вăл — пропагандистсен семинарĕсене идейăлла теори тĕлĕшĕнчен лайăх иртмелле тăвасси. Семинарсене хаклани пропаганда ĕçне пысăк сиен кӳрет. Нумаях пулмасть КПСС обкомĕ Чурачăк райкомĕ пропагандистсемпе мĕнле ĕçлени çинчен сӳтсе яврĕ. Райком пропагандистсен семинарĕсене юлашки вăхăтченех тивĕçлипе хаклаçан. Семинарта пулакан лекцисен идейăлла шайĕ çӳлĕ вырăнта тăмасть. Сăмахран, Васильев юлташ «СССР тата капитализмла тĕнче» темăпа тăрăх лекци вулама хатĕрленмесĕр пынă, вăл план та, конспект та çырман, политшкулсенче вĕренекенĕсене пулăшма кăларнă кĕнекерен уйрăм сыпăксене кăна вуласа панă. Семинарта теорилле тата методикăлла ыйтусене сӳтсе явни çук; пĕр-пĕрин опычĕпе паллашмаççĕ. Вĕренекен материала пурнăçпа çыхăнтармаççĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене вĕреннĕ чухне район пурнăçĕнчен пĕр тĕслĕх те илсе кăтартман. Çавăнпа та райнонти политшкулсемпе кружоксенче политикăлла вĕренĕвĕн идейăлла шайĕ кирлĕ вырăнта тăмасть.

Семинарсене иртерĕ чухне вĕренекен темăна паянхи задачăсемпе пĕлсе çыхăнтармалла. Политшкулсемпе кружоксенче марксистла-ленинла наукăна пурнăçран уйрăм илсе вĕрентни пулмалла мар. Семинарсем, шкулсемпе кружоксем умĕнче тăракан чи кирлĕ задачăсенчен пĕри—КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕнче тата партипе правительство ялхуçалăхне, совет суту-илĕвне вăйлатса аталантарас, промышленноçпа апат-çимĕç таварĕсем çителĕклĕ туса кăларас тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсенче лартнă задачăсене тĕплĕн те тарăн ăнлантарса парасси пулать.

Пропагандистсемпе ĕçлес тени вăл пропаганда ĕçне хутшăннă мĕнпур кадрсемпе ĕçлес тенине пĕлтерет. КПСС Чкаловски райкомĕ кружоксемпе политшкулсен руководителĕсемпе çеç мар, хăйĕн штатра тăман лекторĕсемпе те ĕçлет. Лекторсен ушкăнĕ уйрăм лекцисене тăтăшах сӳтсе явать. Çапла туни лекцисен идейăлла шайне ӳстерме пулăшать.

Анчах капла ĕçленине пур çĕрте те курма çук-ха. Партин Елчĕк райкомĕ штатра тăман лекторсен семинарĕсене хутран-ситрен çеç иртерет, вĕсен ĕçне тĕрĕслемест. Уйрăмах марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма уйăрнă консультантсемпе ĕçлесси начар тăрать. Комсомольски районĕнчи коммунистсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ ытла харпăр хăй тĕллĕн вĕренме кăмăл тунă, анчах ку юлташсем вĕренӳре кирлĕ пулăшăва илеймеççĕ. Вĕсем çумне çирепленĕ консультантсем нумайăшĕ хут çинче кăна шутланаççĕ.

Чылай районсенче комсомол пропагандисчĕсемпе ĕçлессине хакламаççĕ. Комсомолăн политкружокĕсемпе шкулĕсене ертсе пыма темиçе коммунист уйăрса панипех ĕçе татса панă тесе шутлаççĕ, комсомол пропагандисчĕсен семинарĕсене иртерме çителĕклĕ пулăшмаççĕ, комсомол кружокĕсенчи занятисен содержанийĕпе интересленмеççĕ. Кунта çакна манас пулмасть: иртнĕ суйлавсенче комсомола ертсе пырас ĕçе çĕнĕ работниксем чылай уйăрса лартнă. Вĕсенчен нумайăшĕн хастарлăхĕ пысăк, анчах ĕçре опыт çителĕксĕр. Çавăнпа вĕсем парторганизацисенчен ĕçлĕ пулăшу кĕтеççĕ Çамрăк ăрăва марксистла-ленинла воспитани парасси ку ĕçе парторганизацисем куллен ертсе пынинчен килет. Комсомол вĕренĕвне лайăх йĕркелесси— партин хула тата район комитечĕсен, пуçламăш парторганизацисен тивĕçĕ.

Пропагандист пулса ĕçлесси—чыслă та хисеплĕ ĕç. Семинарсене çӳресси, пропаганда ĕçĕн ăсталăхне ӳстерсе пырасси, кашни занятие, лекцие, консультацие иртерме пур енчен те тĕплĕн хатĕрленесси—пропагандистăн тивĕçĕ. Пропагандистран нумай ыйтаççĕ, çавăнпа та унăн хăйĕн те ывăнма пĕлмесĕр вĕренмелле, нумай пĕлмелле.

Пропагандистăн вĕренӳ материалне интереслĕ, илемлĕ, ăнланмалла чĕлхепе каласа памалла. Унăн вĕренекенсене политикăлла пĕлӳсем илессишĕн тăрăшма хавхалантармалла. Пропагандистăн вĕренекенсене харпăр хăй тĕллĕн шухăшлама хăнăхтармалла, коммунизмшăн хастарлăн та пĕтĕм вăй-хăватпа кĕрешекенсем пулма воспитани памалла.

КПСС хула тата район комитечĕсенче ĕçлекенсен кружоксемпе шкулсен занятийĕсенче тăтăшах пулмалла, пропагандист ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене çийĕнчех пĕтерме пулăшмалла. Пропагандистсен ĕçĕ çинчен парти пухăвĕнче, парти комитечĕн — бюровĕнче час-часах сӳтсе явмалла.

Пропагандист парти вĕренĕвĕн ăнăçлăхне татса парать. Пропагандистсемпе ĕçлесси—парторганизацисен кулленхи тивĕçĕ.

Çулталăкри плана тултарнă

ЧИТА. Пани Петровски-Забайкальски металлурги завочĕн коллективĕ çулталăкри плана пур енĕпе те тултарса çитерчĕ. Мартен цехĕ, çулталăкри плана декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнчех пурнăçласа, планран иртерсе хурçă нумай шăратса панă.

ХАРЬКОВ. Мануильский ячĕпе тăракан çăм тасатса хатĕрлекен фабрика çулталăкри плана срокчен пурнăçланă. Планран иртерсе 19 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. План тăрăх пĕрремĕш сорт çăм 93 процент туса кăлармалла пулсан, 98 процент туса кăлараççĕ. Декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС).

Пĕтĕм халăх уявне хатĕрленеççĕ

СЕМЕРЛЕ. «Большевик» завод коллективĕ Украина Россипе пĕрлешнĕренпе 300 çул тултарнине чыслăн паллă тума хатĕрленет. Халĕ агитаторсем пур цехсенче бригадăсенче те Украина ССР-ĕ совет власĕ çулĕсенче тунă ӳсĕмсем çинчен каласçусем иртереççĕ.

«Большевик» завод коллективĕпе Украинăра [illegible] çирĕп туслăх пуçланнă. Çак завода тунă чухне те, кайран та кунта украина халăхĕн [illegible] чылай ĕçленĕ. Сăмахран, [illegible] «Большевик» завода тунă чухне кунта украинец А. [illegible] начальник пулнă. Заводра [illegible] та украинец Н. [illegible] пулнă. Мартен сехĕн мастерĕ пулнă, кайрахпа цех начальникĕ пулнă А. Рудень юлташ та украинец. Киеври институтран вĕренсе тухнă Н. Соколов юлташ, моторов механикĕ А. Голубовский, рубильщик А. Моисеенко, электромонтер М. Мирошниченко тата ытти [illegible] те заводра темиçе çул ĕçлеççĕ. Халĕ вĕсем хăйсем çуралса ӳснĕ Украина çĕршывĕ, унăн халăхĕ çинчен каласа параççĕ. Завод валли кирлĕ хăшпĕр детальсене Харьковри предприятисем туса панă.

Ситес çул «Большевик» завода çĕнетсе [illegible] тытăнаççĕ. Çĕнетмелли плана «Гипрорезинтрест» Украинăри уйрăмĕнче [illegible] инженерсем туса панă.

И. ЕВГЕНЬЕВ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

ВЦСПС XII-мĕш пленумĕ

Декабрĕн 26-мĕшĕнче Мускаври Союзсен çуртĕн Октябрьски залĕнче ВЦСПС XII-мĕш пленумĕ уçăлнă. СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ тата СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ халăх валли куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларасси çинчен йышăннă решенисем май профсоюзсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВЦСПС председателĕ Н. М. Шверник юлташ доклад тунă.

Партипе правительство социализмла экономикăна вăйлатма тата ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатса пыма йышăннă программа питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртса, докладчик çак программăна пурнăçлас енĕпе профсоюзсен пысăк ĕçсем туса пымалли çинчен тĕплĕн каланă.

Докладра ялхуçалăхĕпе хатĕрлев ĕçĕнчи рабочисемпе служащисен профсоюзĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критикленĕ, çавăн пекех тата суту-илӳ предприятийĕсенчи, уйрăмах столовăйсемпе ресторансенчи тата коопераци работникĕсен профсоюз организацийĕсен задачисене сӳтсе явнă. (ТАСС).

Çĕнĕ чугун çул

АКМОЛИНСК, декабрĕн 26-мĕшĕ (ТАСС). Акмолинскпа Павлодар хушшинчи чугун çула туса пĕтерчĕ. Унта поездсем çӳреме пуçланă.

Ереймень-Тау станцийĕнче чугун çул строителĕсен митингĕ пулнă. Митингра правительство комиссийĕн председателĕ Куликов юлташ Акмолинскпа Павлодар хушшинчи чугун çула лайăх тунă тесе йышăнма май пурри çинчен пĕлтернĕ. Çĕнĕ çул тăршшĕ—438 километр.

Чугун çул строительстви управленийĕн начальникĕ Гулаков юлташ строительсем пысăк пăттăрлăхпа ĕçлени çинчен каласа панă. Чугун çул тунă чухне 11 миллион кубометр ытла çĕр чавса кăларнă, 198 сооружени туса лартнă. Çеçенхирте çĕнĕрен чугун çул станцийĕсем тунă, унта пурăнмалли лайăх çуртсем, клубсем, шкулсем пур.

Митинг пулса иртнĕ хыççăн Казах ССР Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Керимбаев юлташ чугун çул урлă карса хунă хĕрлĕ лентăна касса татнă. Павлодар енчен поезд килсе çитнĕ. Тепĕр çулĕпе Акмолинскран поезд тухса кайнă.

Ялхуçалăхне—çĕнĕ машинăсем

Осипенко хулинчи (Украина ССР-ĕ) çул тунă çĕрте ĕçлемелли машинăсем тăвакан завод тислĕк салатмалли çĕнĕ машина туса кăларма тытăннă. Çак «НТ-2» текен çĕнĕ машинăна «Универсал» трактортан кăкарса ĕçлемелле. Ку машинăпа пĕр сехет хушшинче 1—1,5 гектар çине тислĕк салатса пăрахма пулать. Машина кузовне виçĕ кубометр тислĕк кĕрет, салатнă чухне тислĕке 2,5 метр сарлакăш пăрахса пырать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: тислĕк салатмалли «НТ-2» машина.

А. КРАСОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пур колхозсенче те курăк акмалли пусă çаврăнăшĕ тунă

НОВГОРОД. (ТАСС). Облаçри ялхуçалăх управленийĕн çĕр виçекен отрячĕсем уйри ĕçсене туса пĕтернĕ. Курăк акмалли пусă çаврăнăшĕсем 232 ялхуçалăх артелĕнче тунă. Çапла вара облаçри пур колхозсенче те курăк акмалли пусă çаврăнăшĕсем туса çитернĕ.

Нумай колхозсенче, уйри тата выльăх апачĕлĕх культурăсем акмалли пусă çаврăнăшĕсемсĕр пуçне, пахча çимĕçсем лартмалли пусă çаврăнăшĕсем тунă, садсем ӳстерме участоксем уйăрнă.

Облаçра 100 пин гектар çерем çĕрсе тырпул акмалла тума палăртнă.

Аш-какай ытларах хатĕрлессишĕн

КИЕВ. (ТАСС). Украинăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен совхозсен коллективĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановлени хăвăртрах пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Социализмлă ăмăртура Полтава облаçĕнчи колхозсем малта пыраççĕ. Вĕсем кăçал государствăна кашни 100 гектар акмалли çĕр пуçне 125 центнер сысна ашĕ панă (чĕрĕ виçепе). Çапла вĕсем çулталăкри плана чылай иртерсе тултарнă.

Сталино облаçĕнчи совхозсем те кăçал аш-какай нумайрах хатĕрленĕ. Вĕсем государствăна кашни 100 гектар акмалли çĕр пуçне 84 центнер сысна ашĕ панă. Винница облаçĕнчи совхозсем те чылай пысăк çитĕнӳ тунă.

Мускав хулинчи тата Мускав облаçĕнчи промышленность 1953 çулхи плана срокчен тултарнă

Партин XIX-мĕш съезчĕн, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн историллĕ решенийĕсемпе хавхаланса, Мускав хулинчи тата Мускав облаçĕнчи промышленность предприятийĕсенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи промышленность 1953 çулта пĕтĕмпе продукци туса кăлармалли плана срокчен—декабрĕн 17-мĕшĕнче пурнăçланă.

Пиншăр промышленность предприятийĕсем пысăк çитĕнӳсем тунă. 1952 çулхипе танлаштарсан, хурçă, металл касмалли станоксем, автомобильсем, паравуссем, электромоторсем, трансформаторсем, подшипниксем, питĕ тĕрĕс ĕçлекен приборсем, ялхуçалăх валли минераллă удобренисем туса кăларасси чылай ӳснĕ.

Партипе правительство решенийĕсене пурнăçласа, Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи промышленность работникĕсем халăх валли кирлĕ таварсем туса кăларассине чылай ӳстернĕ.

Çулталăк вĕçлениччен планран иртерсе çĕршер миллион тенкĕлĕх промышленность продукцийĕ туса кăлараççĕ.

Çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртессишĕн, технологие лайăхлатассишĕн, производствăна лайăхрах организацилессишĕн, новаторсен опытне анлăн сарассишĕн кĕрешсе, предприятисем продукци пахалăхне чылай лайăхлатнă, техникăлла-экономикăлла показательсем те чылай лайăхланнă.

Анчах хăшпĕр предприятисем 1953 çулта социализмла ăмăртса ĕçлеме илнĕ обязательствăсене пурнăçлайман.

Малта пыракан предприятисен ĕçĕ производствăна вăйлатма пысăк резервсем пуррине кăтартса парать, çав резервсемпе тулли усă курас пулать.

Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи промышленность предприятийĕсенче 1954 çулти плана срокчен тултарассишĕн, продукци пахалăхне малалла лайăхлатассишĕн, кашни предприяти тупăшлă ĕçлемелле тăвассишĕн, производство сурчĕсене пысăклатмасăрах продукци ытларах туса кăларассишĕн социализмла ăмăрту сарăлса пырать. (ТАСС).

Хамăр республикăра

Производство çурчĕсене пысăклатмасăрах продукци туса кăларассине ӳстерĕр

Шупашкарти макарон фабрики продукци туса кăларассине çултан-çул ӳстерсе пырать. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ тата СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, фабрика коллективĕ çĕнĕ çитĕнӳ турĕ, çулталăкри планран иртерсе 1,400 центнер пахамакарон, вермишель, лапша туса кăларчĕ.

Фабрика коллективĕн творчествăлла пултарулăхĕ ӳсçе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Рабочисем пурте ĕç нормине тултараççĕ тата иртерсе тултараççĕ. Уйрăмах З. Христусова, А. Васильянова, М. Тарасова, В. Белякова стахановкăсем лайăх ĕçленине палăртас пулать. Вĕсем нормăна тăтăшах иртерсе тултараççĕ, паха продукци çеç туса кăлараççĕ, çăнăх перекетлеççĕ. 11 уйăх хушшинче фабрика 30 центнер ытла шурă çăнăх перекетленĕ, ĕç тухăçлăхне, плапа танлаштарсан, 8,6 процент ӳстернĕ. Вунă бригадăран сакkăрăшĕ пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне илме тивĕçлĕ пулнă.

Социализмла ăмăртăвăн виççĕмĕш кварталти итогĕсем тăрăх, фабрика коллективĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Çĕршыври малта пыракан предприятисенче производство çурчĕсемпе лайăхрах усă курассишĕн кĕрешеççĕ, халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстермелли майсене палăртаççĕ, çĕнĕ обязательствăсем йышăнаççĕ. Макарон фабрикин коллективĕ çак патриотла çĕнĕ пуçарăва кăмăллăн кĕтсе илчĕ. 1954 çулта фабрикăн, кăçалхи плапа танлаштарсан, 6.000 центнер продукци ытларах туса кăлармалла. Фабрика коллективĕ çак задание производство çурчĕсене пысăклатмасăрах пурнăçлама, çĕнĕ шăвăла прес тата хăшпĕр хатĕрсем вырнаçтарса лартма пулчĕ. Çавăн хыççăн фабрика хăвачĕ 20 процент ытла ӳсет.

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ 24-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă.

«Блокнотра» Украина Российăпа пĕрлешнĕренпе виççĕр çул тултарни çинчен тата СССР Верховнăй Судĕн Специальнăй Суд Присутствийĕ суйăвĕ, шпион Берийăпа унăн [illegible] çинчен калаçу иртерекен агитаторсем пичетленнĕ.

«Малта пыракансен опычĕ» ятлă пайра Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Е. Андреев юлташ колхозниксем общество выльăх-чĕрлĕхне малалла аталантарассишĕн [illegible] кĕрешни çинчен каласа пани пичетленнĕ.

Агитаторсем валли [illegible] усă курма [illegible] материалсем пур.

„Большевик" колхозра

Парти членĕ Иван Александрович Александров зоотехник «Большевик» колхозра ялан ăна ĕçлеме пычĕ. Колхозлă ял ĕçченĕсем ăна ăшшăн сума суса кĕтсе илчĕç. Правлени ăна лайăх хваттере вырнаçтарчĕ, ĕçлеме услови туса пачĕ.

Александров юлташ обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçсемпе тĕплĕн паллашрĕ. Вăл çакна асăрхарĕ: фермăсенче выльăх апатне виçесĕр, перекетсĕр расходлаççĕ, утă-улăма выльăхсен ури айне пăрахса параççĕ; фермăра ĕçлекенсем хушшинче наука çитĕнĕвĕсем тата малта пыракансен опычĕ çинчен ăнлантарса паракан çук.

Колхоз председателĕ М. Филимонова правлени членĕсем, пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Павлов юлташ зоотехник асăрхаттарнисене тата вăл панă сĕнӳсене тимлĕн итлеççĕ.

Колхозăн выльăх апачĕ çителĕклĕ. Утă-улăм, силос, витаминлă тата сĕтеклĕ апатсем, кăшман, турнепс, çĕрулми т. ыт. те кирлĕ чухлĕ хатĕрленĕ. Анчах ăна тирпейсĕр тыткаласан, виçесĕр, кирлĕ [illegible] пĕтерсен, пахах, вăл çителĕксĕр пулма пултарать.

Александров юлташ колхоз правленийĕ [illegible] выльăх апачĕн балансне тата рационне туса хатĕрлеме пулăшрĕ. [illegible]

[illegible]

Колхозра сурăхсене хатĕрленесси вăйланса пырать. Уй-хире пĕр уйăх хушшинче 1.500 лав тислĕк кăларнă. Ку ĕçре А. Иванова И. Егоров бригадисем малта пыраççĕ.

Колхоз тимĕрçи В. Белоусов комсомолец 36 пауг, 4 селка, 50 сӳре хатĕрлесе хучĕ. Унăн ĕçне правлени лайăх хак парса йышăнчĕ.

МТС механизаторĕсем колхоза вăрлăх сортлама пысăк пулăшу параççĕ. Г. Казакова А. Федоров механизаторсем ХТЗ-7 тракторпа ĕçлекен ОС-3 сортировкăпа кунне 10 тонна ахăн вăрлăх сортлаççĕ.

* * *

Партипе правительство колхоз членĕсене выльăх-чĕрлĕх ӳстерме анлă майсем уçса пачĕç. «Большевик» колхоз членĕсем В. Иванов, Д. Иванов, А. Константинов, М. Иванова, Ф. Краснова тата ыттисем те пурĕ 20 колхозник çамрăк выльăх тата пăрусем туянчĕç. [illegible]

[illegible]

Г. МАРКОВ.

Йĕпреç районĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Конкретлă пулăшу кирлĕ

ВИПРЕС. Крупская ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци çамăр коммуниста пĕрлештерсе тăрать. Анчах парторганизаци хăйĕн партиллĕ-политикăлла тата организацилле ĕçĕсене çителĕксĕр туса пырать. Парти пухăвĕсем çăвра хутра çеç пухăççĕ. Районти парторганизацин VIII-мĕш конференцийĕ пулнăранпа тăватă уйăх иртрĕ пулин те, конференци решенине халĕ те парти пухăвĕнче сӳтсе явман. Парторганизацири хăшпĕр коммунистсем парти дисциплинине пăсаççĕ, партилле вĕренӳ çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Калинкова коммунистка парти историне вĕренмелли кружокăн пĕр занятийĕнче пулнă та, тек пырса та курман.

Пуçламăш парторганизаци çавăн пекех артелĕн обществăлла хуçалăхне тĕреклетессишĕн çителĕксĕр тăрăшать. Колхоз хуçалăхла-политикăлла задачăсене татса парас тĕлĕшпе юлса пырать. Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçламан. Сӳракине хатĕрлеме пуçламан. Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл касарма илĕх хатĕрленĕ: выльăх апачĕ çителĕксĕр, сысна валли вите çитмест.

Парторганизаци секретарĕ Н. Семенов юлташ ĕçleme тытăнни нумай пулмасть, вăл ĕçе пăхса вĕренсе çитмен. Çавăн пирки вăл пур ыйтусене те хăй тĕллĕн татса параймасть.

Парти райкомĕн парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсем пайĕ çакăн çинчен лайăх пĕлет. Апла пулин те пуçламăш парторганизацие конкретлă пулăшу памасть. Октябрь уйăхĕнче колхозри выльăх-чĕрлĕхе хĕле [illegible] хатĕрлени çинчен парти райкомĕн бюровĕ колхоз председателĕн Д. Васильев юлташăн докладне итленĕ, çитменлĕхсем нумай пулнине палăртнă тата вĕсене пĕтерессишĕн тăрăшманшăн Д. Васильев юлташа взыскани панă та [illegible]. Ун хыççăн колхоза [illegible] [illegible] райком работникĕсем интересленмеççĕ. Ноябрь уйăхĕнче колхоза райком секретарĕ М. Дмитриев юлташ пырса кайнă, вăл ятти финанс ĕçĕсем кĕнеле пыни çинчен ыйткаласа пĕлнĕ те, тухса кайнă.

Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ парти райкомĕсене пуçламăш парторганизацисене ертсе пырассине тĕпрен улăштарса лайăхлатма, организацилле ĕçе вăйлатма хушрĕ. Партин Ĕçпрес райкомĕ пуçламăш парторганизацисене çителĕксĕр пулăшать-ха.

Н. ПАВЛОВ.

Колхозри массăлла-политикăлла ĕç

ЧКАЛОВСКИ. «Гвардеец» колхозри пуçламăш парторганизаци ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе партипе правительство йышăннă постановленисем çинчен колхозниксене ăнлантарса парас ĕçе лайăх йĕркеленĕ.

Чи малтанах парторганизаци усă пуху ирттерчĕ. Унта КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем çинчен тата çак постановленисене колхозниксене ăнлантарса парас тĕлĕшпе агитколлективă умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе явнă, ĕç планне çирĕплетнĕ. Агитаторсене уйрăммăн пухса, вĕсене колхоз производствинче çитес [illegible] суя хушшинче хăпартас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен каласа панă.

Агитаторсем хăйсене шанса панă ĕçе чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Кашни бригадăра, фермăра пухусем ирттернĕ. А. Ресметов, А. Перепелкин, В. Щукин, В. Зайцев, П. Зайцев агитаторсем тăрăшсах ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксен килĕсенче час-часах пулаççĕ, каласусем ирттереççĕ, бригадăсенчи пухусенче тухса калаççĕ.

Парторганизаци политикăлла-массăлла ĕçĕн пур формисемпе те усă курать. Пленум решенийĕсем тăрăх пурĕ 16 лекци тата доклад ирттернĕ, вĕсене [illegible] çын итлесе илнĕ. Лекцисемпе докладсем ирттерес ĕçе колхозри специалистсене, ялти учительсене явăçтарнă. Колхоз председателĕ М. Долгов юлташ «Пирĕн колхоз умĕнче тăракан задачăсем», В. Кузнецов учитель «КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçласси — кашни ĕçсыннин тивĕçĕ», КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ А. Селенин юлташ «Пленум решенийĕсем ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатмалли программа», колхоз агрономĕ А. Ефимов юлташ бригадăсенче «Тырпул тухăçлăхне ӳстерес ĕçре шалти резервсемпе усă курасси» темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем ирттерчĕç.

Колхозра стена хаçачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Кăтарту хăмипе хисеп хăми социализмла ăмăртăва вăйлатма пулăшаççĕ.

Пленум решенийĕсене пропагандăлас ĕçре ялти клуб пысăк пулăшу парать. Лекцисемпе докладсем ирттернипе пĕрлех, клубра интереслĕ диаграммăсем пур. Вĕсенче колхоз организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклелесе пынине лайăх кăтартнă. Çавăн пекех Пленум решенийĕсенчен илнĕ цифрăсене çырса çапнă.

Колхозра политикăлла-массăлла ĕçе кампанилле мар, куллен туса пыраççĕ. Политикăлла-массăлла ĕç колхозниксен творчествăлла активлăхне хăпартма, вĕсене социализмла ăмăртура илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлама мобилизацилет.

Кашни килте радио каласать. Колхозăн яла 330 экземпляр тĕрлĕ хаçат-журнал килет.

В. ИГНАТЬЕВ.

Кружок лайăх ĕçлет

СОВЕТСКИ. Жданов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци çумĕнчи кружокра 24 çын парти историне вĕренет, вĕсенчен саккăрăшĕ коммунистсем. Кружока правлени членĕсемпе колхозри активсăр пуçне больницăра, сыхăну уйрăмĕнче тата ял Советĕнче ĕçлекен ответлă работниксем çӳреççĕ.

Кружок занятийĕсем эрнере пĕрре — кашни тунтикун клубра пулса иртеççĕ. Кунта ăшă та çутă, вĕренӳре кирлĕ литература çителĕклĕ.

Кружок ĕçне Хучашри 7 çул вĕренмелли шкул учителĕ Геннадий Михайлович Копров ертсе пырать. Вăл виççĕмĕш çул ĕнтĕ пропагандист пулса ĕçлет, вĕренекенсене тарăн пĕлӳ парать. Çакă вăл, пуринчен малтан, Копров юлташ кашни занятие ирттерме тĕплĕ хатĕрленнипе килет. Апа час-часах ялти библиотекăра курма пулать. Унта вăл çитес занятире вĕрентмелли темăпа çыхăнакан илемлĕ литература вулать, çавăн пекех çĕнĕ хаçат-журналсене пăхса тухать. Сăмах майĕн каласан, Копров юлташ хăй те Мускавра тата Шупашкарта тухакан хаçатсене илсе тăрать, халĕ каллех килес çул валли 7 тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илчĕ.

Занятисем ялан активлă иртеççĕ. Копров юлташ кашни темăнах лайăх ăнлантарса парать, хăйĕн ĕçĕнче вăл наглядлăй пособисемпе те, илемлĕ литературăпа та тулли усă курать. Сăмахран, ку таранччен вĕреннĕ темăсем тăрăх ирттернĕ занятисенче вăл Николаева çырнă «Жатва», Ажаевăн «Далеко от Москвы». Саксен «В гору», А. Толстойăн «Хождение по мукам» ятлă произведенийĕсем çинчен каласа пачĕ.

Кружок занятийĕсем тата акă мĕншĕн активлă иртеççĕ. Копров юлташ çĕнĕ материала каласа ăнлантарнă чухне ăна ялан пурăнти фактсемпе çыхăнтарать, хальхи пурнăçпа танлаштарса каласа парать. Çакă вăл, паллах, материала тĕплĕн ăнланса юлма, вĕренекенсен активлăхне ӳстерме пулăшать. Акă, сăмахран, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине вĕреннĕ чухне Копров юлташ МТС тата Жданов ячĕпе тăракан колхоз ĕçĕсем çинчен те чарăнса тăчĕ. Çавăн пекех вăл пирĕн колхоз сулсеренех тухăçлă сĕрулмипе пахча çимĕç ӳстерни, вĕсенчен пысăк тупăш илни çинчен асăнчĕ.

Кружока çӳрекенсем пурте кашни тема тăрăх конспект çырса хатĕрлеççĕ. Уйрăмах В. Свешников, В. Прокопьев, Н. Свешников, П. Яшмулов, К. Прокопьева, М Федоров юлташсем занятисенче хăйсен активлăхне кăтартаççĕ, час-часах тухса калаçаççĕ, ыйтусем çине лайăх та тарăн ответсем параççĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци кружок ĕçĕпе тăтăшах интересленет. Парти вĕренĕвĕ мĕнле пулса пыни çинчен эпир час-часах парти пухăвĕсенче сӳтсе яватпăр, вĕренӳре тĕл пулакан çăрмавсене тата ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшатпăр.

В. АЛЕКСАНДРОВ,
Жданов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн 1953 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнчи номерĕнче «Комсомольски районĕнче парти вĕренĕвне начар йĕркеленĕ» ятлă статья пичетленсе тухнăччĕ.

КПСС Комсомольски райкомĕн секретарĕ М. Родионов юлташ статьяра кăтартнă çитменлĕхсем тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Парти райкомĕ ку ыйтăва бюро ларăвĕнче тата райкомăн штатра тăман пропагандисчĕсен семинарĕнче те сӳтсе явнă.

Райком парти вĕренĕвĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăннă.

Учрежденисенчи парторганизаци секретарĕсен семинарĕ

КПСС Етĕрне райкомĕ пуçламăш парторганизаци секретарĕсемпе кашни уйăхрах семинар ирттерет. Çак кунсенче учрежденисенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсен тата вĕсен заместителĕсен семинарĕ пулса иртрĕ.

Семинарта «Совет учрежденийĕнчи партилле-политикăлла ĕç», «Учрежденисенчи стена хаçачĕсене ертсе пырасси» темăсемпе лекцисем вуласа пачĕç.

Г. МЫТИКОВ.

Çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре наука çитĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртмелле

Тĕштырă, выльăх апачĕ тата техникăлла культурăсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре тăпра пахалăхне лайăхлатни тĕп вырăн йышăнать. Тăпра пахалăхне лайăхлатас тесен, пусă çаврăнăшне тĕрĕс йĕркелес пулать. Пусă çаврăнăшне тĕрĕс йĕркелени çĕрпе пĕлсе усă курма, ӳсентăрансен акса тăвас тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсене тачă çыхăнтарса пыма май парать.

Ялхуçалăх культурисене ӳсме ăвăтлă тата минераллă апатсем кирлĕ. Çавăнпа та тăпра пахалăхне ӳстерме органикăлла тата минераллă удобренисемпе усă курмалла.

Тăпра пахалăхне ӳстерес тĕллевпе пирĕн селекци станцийĕ юлашки çулсенче уй-хире 15 пин тонна тислĕк тата торфпа тислĕк компосчĕ, 1.300 тонна минераллă удобрени кăларчĕ.

Кĕллĕ йӳçĕк тăпрана извеçлĕ мергель, извеçлĕ туф хывни пысăк усă парать. Эпир юлашки виçĕ çул хушшинче 342 гектар çĕр лаптăкĕнчи тăпрана извеçлерĕмĕр.

Агротехника комплексне пурнăçлани пирĕн станцие тăпра пахалăхне лайăхлатма, мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме май пачĕ.

Пирĕн опыт кăтартса панă тăрăх, çĕре вăхăтра тата тарăн сухалани (хура çĕртмене, кĕрхи çĕртмене 27—30 сантиметр тарăнăш сухалани) тырпул тухăçлăхне гектар пуçне вăтам шутпа 4—5 центнер таран ӳстерет. Тарăн сухалănипе пĕрлех уя тислĕк тата минераллă удобренисем кăларни тырпул тухăçлăхне гектар пуçне 3—4 центнер хушăнтарать.

Суйласа илнĕ сортлă шултра вăрлăх акни тырпул тухăçлăхне гектар пуçне 2—3 центнер таран хăпартать.

Ансăр ретлĕ тата хĕреслĕ майпа акни тырпул тухăçлăхне кашни гектар пуçне 2—4 центнер, таран, кĕрхи тырăсен, уйрăмах ыраш калчине минераллă удобренисемпе апат пани гектар пуçне 6 центнер таранччен ӳстерет. Тăпрана извеçлени нумай çул ӳсекен курăксен тухăçлăхне кашни гектар çинче 10 центнертан пуçласа 25 центнера çити ӳстерет.

Çурхи тулăна юр айне акса хăварни ăна малашне аксă тунă чухне вутпуççипе чирлесрен хăтарать.

Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе селекци станцийĕ агротехника комплексне çирĕп пурнăçласа пырать. Кăна çак тĕслĕхсем те лайăх кăтартса параççĕ: 1935 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 10,7-шер центнер, 1953 çулта вара кашни гектартан вăтам шутпа 19,3-шер центнер тырпул пухса кĕртнĕ. 1940 çулхипе танлаштарсан, кăçал тырпул икĕ хут ытларах пухса кĕртнĕ.

Выльăх апачлăх культурăсем акса тумалли пусă çаврăнăшĕнче кăçал кашни гектартан 33-шер центнер, уйрăм участоксем çинчен 50—74-шар центнер паха утă пухса кĕртнĕ. Кашни гектартан кăçал çĕрулми 130-шар центнер, тымарçимĕçсемпе силос культурисем 200—250-шар центнер туса илнĕ.

Тăпра пахалăхне пĕрмаях лайăхлатса пынă май, пирĕн станци кăçал кашни гектартан вăтам шутпа тĕштырăсем 19,3-шер центнер, вăл шутра: ыраш—24-шар центнер, кĕрхи тулă—22-шер центнер, урпа—25-шер центнер, сĕлĕ—19,4-шер центнер, хуратул—14,3-шер центнер туса илнĕ. Уйрăм участоксем çинчен вара 30—35-шер центнер тырпул пухса кĕртнĕ.

* * *

Тырпул тухăçлăхне ӳстерес ĕçре тăпра пахалăхне лайăхлатасси чи кирли пулсан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хуни тĕп вырăн йышăнать.

Опыт кăтартса панă тăрăх, пирĕн условисенче пĕтĕм çĕр лаптăкĕнче тырпул акса тумалли 42—50 процент, выльăх-чĕрлĕх культурисем 30—40 процент чухлĕ йышăнмалла. Çавăн пек пулмасан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре йывăрлăх пулать. Выльăх-чĕрлĕхсĕр тĕштырăсемпе техникăлла культурăсем туса илессине вăйлатма май çук, мĕншĕн тесен уйри тăпрана лайăхлатма органикăлла удобренисем кирлĕ.

Эпир пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 42 процентне тĕштырă культурисем, 40 процентне выльăх апачлĕх культурăсем, ытти лаптăк çине тĕрлĕ культурăсем акатпăр.

Выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ май, 1952 çулта кашни ĕнерен сĕт суса илесси 4.120 килограма çитрĕ. Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозра та пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 25,6 процентне çине выльăх апачлăх культурăсем акаççĕ. Çак колхозра 1952 çулта сăвакан кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.650-шар литр сĕт суса илнĕ, кашни гектартан вăтамран 20-шер центнер тырпул пухса кĕртнĕ.

Анчах республикăри чылай колхозсенче выльăх апачĕ тумалли культурăсене çителĕклĕ акмаççĕ-ха. Тĕслĕхрен, Çĕрпӳ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра тĕштырă культурисене пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 62 процентне çине, выльăх апачлăх культурăсене пурĕ те 8,3 процент чухлĕ кăна акаççĕ. Маленков ячĕпе тăракан колхозра та çавнашкалах. Красноармейски районĕнчи колхозсем те çавăн пекех тăваççĕ. Çакă ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чылай колхозсем мĕнпĕр [illegible] лайăх [illegible] май парать.

Выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетессин мĕнпур çĕр лаптăкĕнче [illegible] усă курассипе тачă çыхăнать. Çĕрĕçĕпе курăк акмалли система ӳсентăрансен акса тăрассине выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине тĕрĕс, планпа çыхăнтарса туса пыма май парать.

Выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетес ыйтăва пирĕн селекци станцийĕ мĕнле майпа татса панă-ха?

Чи малтан, эпир курăк акмалли пусă çаврăнăшне йĕркелесе усă курассине хăвăртлатрăмăр. Станцине 1.288 гектар çĕр çирĕплетсе панă. Вăл шутра 974 гектар çинче пусă çаврăнăшĕсем тунă. Çав хисепрен уй-хир пусă çаврăнăшĕ валли 638,3 гектар, вăл шутран нумай çул ӳсекен курăксем акма 151 гектар уйăрнă. Выльăх апачлăх культурăсем акмалли пусă çаврăнăшĕ 335,8 гектар, вăл шутран нумай çул ӳсекен курăксем акмалли лаптăк 189 гектар йышăнать. Çакă вăл пусă çаврăнăшĕнчи пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 34,9 процентне пулать.

Кунсăр пуçне станци çулленех 20 гектар силослăх культурăсем, 10 гектар тымарçимĕçсем акать тата 20 гектар çĕрулми лартса тăвать. Çапла вара продуктивлă выльăх-чĕрлĕх валли 390 гектар çинче выльăх апачлĕх тĕрлĕ культурăсем акса тăватпăр.

834 гектар çинче, нумай çул ӳсекен курăксемпе пĕрле, тырпул акса тăватпăр, çĕртме пуççи пурĕ те 140 гектар кăна шутланать. Вăл шутран та 25—30 гектар çине выльăхсем валли силос хывма çулленех ыраш акатпăр.

Малтанхи вăхăтра нумай çул ӳсекен курăк вăрлăхĕ çук пирки пĕр çул ӳсекен курăксем, викăпа сĕлĕ хутăштарса, ытларах акрăмăр. Çакă пире тепĕр çултанах выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетме май пачĕ. 1946 çултанпа станцин выльăх апачĕ çитменни пĕрре те пулман.

Эпир çеремлесе хытса кайнă çарансене сухаласа 3—4 çул хушши тĕштырă тата техникăлла культурăсем акнă хыççăн каллех нумай çул ӳсекен курăксем акатпăр. Çапла туни утă тухăçлăхне нумай ӳстерчĕ. Çак майпа 68 гектар çинчи çарана лайăхлатрăмăр. Çав çаран çинче унччен кашни гектартан 8—10 центнер утă çулса илнĕ пулсан, кăçал 50—60 центнер утă пухса илтĕмĕр. Ялхуçалăх культурисене туса илес ĕçре çак майпа усă курнипе тата кучухнехи техника пулăшнипе, хире удобренисем нумай кăларнипе мĕнпур çĕр çинчи тăпра пахалăхне лайăхлатма пулать.

Тăпра пахалăхĕпе пĕрлех тĕштырăсемпе выльăх апачĕ тумалли культурăсен тухăçлăхĕ хăпарать, выльăх апачĕн никĕсĕ çирĕпленет. Çак никĕс çинче вара выльăх-чĕрлĕх йышĕ тата тухăçлăхĕ ӳссе пырать.

Выльăх апачĕ валли ыраш акмалли агротехника çапла: çĕртме пуççи пулмалли хире, курăк тымарĕсене пухса пĕтермелле, çĕнĕ çерçи выльăх [illegible] сухаласа пăрахмалла та, çийĕнчех сӳрелемелле. Выльăхсем валли çулса çитермелли ыраша гектар пуçне 200—220 килограмм нормăпа августăн 1-мĕшĕпе сентябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче акатпăр.

Çав ыраша выльăхсене çуркунне апрель уйăхĕн вĕçĕпе майăн 10-мĕшĕччен вăхăт хушшинче кĕтӳ валли çитереççĕ. Çулса çитермелле пулсан, майăн 10—15-мĕшĕсенчен пуçласа июнĕн 1—10-мĕшĕсенче çитичченех çулса параççĕ. Çав вырăнти ыраш калчисене выльăхсене çитерсе пĕтернĕ хыççăн е çулса илнĕ хыççăн тислĕк, известь тата минераллă удобренисем хывмалла та, 20—25 сантиметр тарăнăш сухаласа çийĕнчех сӳрелемелле. Гектар пуçне 30—40 тонна тислĕк, 2—3 центнер суперфосфат, 1 центнер калий тăварĕ хывмалла. Сумкурăксем шăтса тухсассăн культивация тумалла.

Ыраш калчи çулса илнĕ çĕртме пуссинче 1953 çулта кашни гектартан 28 центнер, хура çĕртме çине акнă пуссăра — 25,8 центнер ыраш пухса илтĕмĕр. Урăхла каласан, ыраш калчи çулса илнĕ çĕртме пусси тырпул тухăçлăхне чакармасть, ӳстерсе пырать.

Выльăх валли ыраш акни кĕркунне нумай вăхăт хушши тата çуркунне иртерех кĕтӳ çӳретме май парать. Выльăхсем валли ыраш акма станци 1950 çулта тытăннă.

Выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетмелли тепĕр май — хĕлле çитерме сĕтеклĕ апат хатĕрлес тĕлĕшпе çĕрулмипе тымарçимĕçсем тата силослăх культурăсем акса тăвасси пулать. Çак ĕçсене пурнăçлани пире выльăх апачĕ хатĕрлессине çултанçул ӳстерме май пачĕ.

Выльăх апачĕн никĕсĕ çирĕпленсе пынă май селекци станцийĕнчи выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕ юлашки вăхăтра чылай ӳсрĕ. Выльăхсен хисепĕ 1953 çулта, майракаллă шултра пĕр пуç выльăх çине куçарса шутласан, 1946 çулхинчен 2 хут ытла ӳснĕ. Çав вăхăтрах çĕр лаптăкĕ ушăнман. 1946 çулта пĕр выльăх пуçне 8 гектар çĕр тивнĕ пулсан, 1953 çулта 3,5 гектар анчах тивет. Ку шута рабочисемпе служащисен выльăхĕ кĕмест. Селекци станцийĕнчи рабочисемпе служащисем 120 ĕнене ытла усраççĕ.

Çапла ĕнтĕ, çĕр лаптăкĕн пысăкăшĕ ушăнман пулсан та, халĕ 1940 çулхипе танлаштарсан, кашни гектар çинчен 4 хут ытларах тĕштырă туса илетпĕр, 2 хут ытларах выльăх-чĕрлĕх усратпăр, ĕнесенчен 3 хут ытларах сĕт суса илетпĕр (1946 çулта кашни ĕнерен 1.303 килограмм сĕт суса илнĕ пулсан, 1953 çулта—4.183 килограмм илнĕ).

Ĕнесем сĕт ытларах парасси вĕсене мĕнле апат çитернинчен нумай килет. Ăна çак таблица кăтартса парать (центнерпа):

Çулсем	Утă улăм	Сĕтеклĕ апат	Симĕс курăк	Тĕшпырă	Пĕтĕм выльăх апачĕн тухăçĕ (кормовой единица çине куçарса)	Пĕр ĕнерен вăтам шутпа сĕт суса илни (килограммпа)
1949	24,80	37,28	63,0	10,5	3794	3190
1950	21,86	46,46	68,0	12,9	4153	3310
1951	22,27	57,03	73,5	12,95	4415	3671
1952	31,60	40,70	60,9	17,90	4801	4120

1949 çулта сăвакан кашни ĕнене 3794 кормовой единица (кормовой единица 1 килограмм сĕлĕпе танлашать) çитерсе 3190 килограмм сĕт суса илнĕ, 1952 çулта 4801 кормовой единица çитернĕ, вăтам шутпа кашни ĕнерен 4120 килограмм сĕт суса илнĕ.

Кунтан çакăн пек вывод туса тăрать: выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне ӳстерессишĕн пыракан кĕрешӳре выльăх апачĕ тата выльăхсене тĕрĕс çитерни тĕп вырăн йышăнса тăрать.

1953 çулта селекци станцийĕ кашни 100 гектар çĕртен тĕштырă 761 центнер, çĕрулми—400 центнер, утă—600 центнер, сĕтеклĕ апатсем—772 центнер, сĕт—221 центнер, аш (чĕрĕ виçепе)—42 центнер, вăл шутран сысна ашĕ — 25 центнер туса илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, ялхуçалăхне малалла вăйлатма тăпра пахалăхне лайăхлатса тата çĕрĕç культурине ӳстерсе пымалла; выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çĕкленӳ тума выльăх апачлĕх культурăсем акма çителĕклĕ лаптăк уйăрмалла. Кĕскен каласан, кашни колхозрах наука çитĕнĕвĕсене тата малта пыракансен опытне анлăн пурнăçласа пыма кирлĕ.

Юлашки çулсенче пирĕн селекци станцийĕ колхозсене нумай çул ӳсекен курăксем акса тумалли çĕнĕ меслет сĕнчĕ. Вăл меслет тăрăх кашни курăка уйрăм ретпе акмалла. Çав меслетпе кăçал клеверпа тимофеевка хутăшне кашнине уйрăм ретпе акса, гектар пуçне 68-шар центнер утă туса илтĕмĕр, çав хутăша илахи меслетпе акса, гектар пуçне 57-шер центнер утă туса илнĕ. Клевер, тимофеевка, люцерна тата шурути вăрлăхĕсене хутăштарса илахи меслетпе аксан, гектар пуçне 60-шар центнер утă туса илнĕ, кашнине уйрăм ретпе аксан, 74-шар центнер утă пухса кĕртнĕ.

Селекци станцийĕ колхозсене пăрçа акса çулса илмелли çĕртме пуссин тума сĕнчĕ. «Торедаг» пăрçана çĕртме пуссине аксан аванрах. Нумай çулхи опыт кăтартса панă тăрăх, çак пăрçана çĕртме пуссине аксан, гектартан 20 центнер пăрçа, çав лаптăк çинчех 22—23 центнер ыраш тухать. Çапла ĕнтĕ, пирĕн селекци станцийĕн тата Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозсен опычĕ кăтартса панă тăрăх, выльăхсене çитерме ыраш калчи çитĕнтерни вырăнта та, пăрçа акса тунă вырăнта та ыраш ăнăçлă туса илме пулать. Çавна тума агротехникăн пĕтĕм комплексне пурнăçлани, çĕрĕç культурине хăпартни кирлĕ.

Çĕртме пуссисĕр пусă çаврăнăшĕ тăвас шутпа, селекци станцийĕ курăк акмалли 9 уйлă пусă çаврăнăшĕ çак схемăпа тума сĕнет: 1-мĕш пусă—нумай çул ӳсекен курăксен пĕррeмĕш çулĕ, 2-мĕшĕ—нумай çул ӳсекен курăксен иккĕмĕш çулĕ, 3-мĕш—çурхи тулă, 4-мĕш—пăрçа йышши культурăсем («Торедаг» пăрçа), 5-мĕш—ыраш калчи çулса илме акнă çĕртме пусси (ку çĕртме пуссине тасатса çĕртме срокĕсенчи пекех тислĕк, известь кăлармалла), 8-мĕш — кĕрхи тырăсем (ыраш е кĕрхи тулă), 9-мĕш—урпа, унтăх нумай çул ӳсекен курăксем акмалла.

Çак пусă çаврăнăшне селекци станцийĕнче 1952 çултан пуçласа пурнăçа кĕртме тытăннă.

Хура тăпралă мар çĕре ытларах тислĕк, торф, минераллă удобренисем тата пурĕ кирлĕ, вара тырпул тухăçлăхне вунăшар хут ӳстерме пулать.

Я. ЛУКЬЯНЕНКО,
Чăвашсен государство селекци станцийĕн директорĕ.

Палăртнă çитменлĕхсене пĕтеретпĕр

Иртнĕ çулта пирĕн колхозри çамрăксем хушшинче культурăлла-массăлла ĕç çителĕксĕр пулса пынă. Отчетпа суйлав пухăвĕнче колхозри комсомолецсем ВЛКСМ комитечĕн ĕçне хытă критиклерĕç. Комсомолецсем ун чухне ялти вулав çуртĕ çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Комсомол организацийĕ вулав çурчĕн ĕçĕсене хутшăнман, çамрăксене вĕренмелли пĕр кружок та организацилемен.

Комсомолецсен пухăвĕ çамрăксем хушшинчи культурăлла-массăлла ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă решени йышăнчĕ. Çĕнĕрен суйланă комитет членĕсем комсомолецсен пухăвĕ йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăчĕç, ĕçшĕн ответлă ялташсене кирлĕ таран пулăшса пычĕç.

Комсомолецсен хастарлăхĕ вĕсене вăхăтрах пысăк ушăнусем тума пулăшрĕ. А. Алексеев, К. Кудряшов комсомолецсем ертсе пынипе çамрăксем вулав çуртне штукатурласа шуратрĕç. Çамрăк художниксем тăрăшнипе вулав çурчĕ колхозниксен кăмăлне тивĕçтермелле илемленчĕ. «Партипе правительство ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшать», «Çĕршыври пысăк строительсем», «Комсомолăн маттур çулĕ» темăсем тăрăх тата совет халăхĕ мирлĕн кĕрешнине кăтартакан витринăсем тунă, политикăпа наука ыйтăвĕсем çинчен каласа паракан кĕнекесен выставкине йĕркелерĕмĕр. Справкăсем паракан сĕтелĕн ĕçне пĕтерсе лартнă.

Кружоксен ĕçĕ лайăхланчĕ. Вулав çуртĕнче драма, литература, картинăсен ӳкерме вĕрентекен, физкультура, [illegible] ĕçне вĕренмелли кружоксем тата [illegible] [illegible] инструментсене вылямалли кружок ĕçлеççĕ. Кружоксен [illegible] [illegible] [illegible] тăрăх пулаççĕ.

Художествăлла пултарулăх коллективĕ колхозниксене час-часах постановкăсемпе концертсем лартса парать. Нумаях пулмасть «Полустанкăра» ятлă пĕр пайлă пьеса тата пысăк концерт лартрĕç. Куравансем кружок ĕçне ырласа йышăнчĕç.

Литература кружокĕ те пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Юлашки кунсенче кăна колхозниксене вулама 160 кĕнеке илсе панă. Колхозниксенчен 43 кĕнеке туса пама заказсем илнĕ. Вулакансем ыйтнă кĕнекесене кружок членĕсем кӳртĕ ялан та пулля тупса пыраççĕ. Кусемсĕр пуçне ялти обществăлла суртсенче, бригадăсемпе фермăсенче куçса çӳрекен библиотекăсем тунă. Литература кружокĕ уйăхра пĕрре «Çамрăксен сасси» ятлă илемлĕ литература журналĕ кăларса тăрать.

Картинăсем ӳкерме вĕрентекен кружок та ӳсĕмсем турĕ. Кружок членĕ М. Ишалеев юлташ А. С. Пушкинăн портретне, «Хула урамĕ», «Чăваш хĕрĕ» картинăсем ӳкерчĕ. Вулав çуртĕнче пулса иртекен çамрăк художниксен ĕçĕсене кăтартса паракан выставкăна хатĕрленсе Г. Соловьев, П. Егоров тата ытти хăй тĕллĕн вĕреннĕ çамрăксем нумай ӳкерчĕксем турĕç.

Комсомолецсем политикăлла-массăлла ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем кашни [illegible] вунăшар кил тăрăх агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, партипе правительство йышăннă историлле постановленийĕсене ăнлантарса параççĕ.

Комсомол организацийĕ час-часах [illegible] [illegible] ирттерет. [illegible] [illegible] вăхăтра çавăн пек пухусем [illegible] ирттернĕ. Вĕсенче «Комсомол организацийĕн [illegible] [illegible]», «[illegible] [illegible] [illegible] çинчен отчечĕ», «Строительство ĕçне массăллăн тухасси», «Суракине хатĕрленесси» ыйтусене сӳтсе явнă. Пуху йышăннă решенисем ялан тĕрĕс пурнăçланаççĕ. Нумаях пулмасть, пухура «1954 çулшăн хаçат çырăнтарас ĕçе комсомолецсене хутшăнтарасси çинчен» сӳтсе яврăмăр. Çавăн хыççăн комсомолецсем хаçат çырăнса пачĕç. П. Кольцов, Н. Изликин тата ытти хăшпĕр комсомолецсем районта е республикăра тухса тăракан хаçатсемсĕр пуçне «Правда», «Сельское хозяйство», «Комсомольская правда» хаçатсем çырăнчĕç.

Комитет сунĕнче уйăхра виçĕ хутчен «Вăйлă тырпулшăн» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Юлашки вăхăтра çак хаçат колхоз çамрăкĕсен чи сывăх тусĕ пулса тăчĕ. Хаçат çамрăксем хушшинчи социализмла ăмăртăва куллен сӳтсе тăрать. Ĕçре палăрнă юлташсене мухтать, вĕсен опычĕпе ыттисене паллаштарать.

Кирлĕ пулсан, хаçат карикатурăсем те туса кăларать, ялнисемпе ĕçрен пăрăнмакансене хытă питлет. Тĕслĕхрен, çамрăксен пухăвĕ строительствăра ĕçлеме «ударлă бригада» организацилерĕ. Комсомолец П. Соловьев, В. Ласков юлташсем малтанхи кунах ĕçе пымарĕç. Редколлегия членĕсем ĕç участокĕнчех стена хаçачĕн номерне кăларчĕç, унта ĕçрен пăрăннă комсомолецсене çивĕччĕн критиклерĕç. Тепĕр кунне Соловьевпа Ласков ĕçе пуринчен малтан пырса çитрĕç.

Çапла вара, виçĕ кун хушшинче «ударлă бригада» ĕне сарайне, ферма работникĕсем пурăнмалли çурта хăпартрĕç.

Г. СЕРГЕЕВ, А. ГОЛУБЕВ,
[illegible] ячĕпе [illegible] колхозри ВЛКСМ организацийĕн секретарĕсем.
Сĕнтĕр районĕ.

Ю р а т с а п ă х р ĕ ç

ИШЛЕЙ. Районта ялхуçалăх ытлăкĕсене ӳкернĕ кинокартинăсен фестивалĕ [illegible] пырать. Çак кунсенче Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем «Новости сельского хозяйства» кинопрограмма 9-мĕш кăларăмне тата С. Бабаевский çырнă «Кавалер Золотой Звезды» произведенийĕ тăрăх ӳкернĕ кинофильма пăхрĕç. Унта 250 çын пулнă.

Кино пулнипе уйăх колхоз агрономĕ Г. Иванов юлташ колхозниксене [illegible] [illegible] çĕрулмипе пахча çимĕçсене [illegible] [illegible] [illegible] лартса тăвасси çинчен каласа пачĕ.

Çак кинокартинăсене Маяк ячĕпе, Чапаев ячĕпе, Андреев ячĕпе тăракан, «Сталинская гвардия», «Правда» колхозсенче те кăтартнă.

М. ХМЕЛЕВ.

Драматургсен парӑмӗ

Çамрӑк писательсен çак кунсенче пулса иртнӗ республикӑри канашлӑвӗ пирӗн литература аталанӑвӗн ытти ыйтӑвӗсемпе пӗрлех драматурги ыйтӑвне те сӳтсе явнӑ. Канашлура çамрӑк авторсен пьесисем пирки хускалнӑ сӑмах пирӗн пӗтӗм чӑваш драматургийӗнчи хару-тӑрӑва пырса тивнӗ.

Чӑн та ӗнтӗ, чӑваш драматургӗсен халӑх умӗнчи парӑмӗ çултан-çул ӳссе пырать. Кӑçалхи сезон пуçламӑшӗнче Чӑваш академи театрӗ оригиналлӑ пьесӑсенчен Л. Родионовӑн «Юратнӑ хӗр» ятлӑ пьесине çеç лартса пачӗ. Кунсӑр пуçне театр репертуарӗнче çӗнӗ пьеса урӑх курӑнмасть-ха. Куçса çӳрекен колхоз театрӗнче ӗçсем татах та ӗмӗртарах. Ку театр куракансене çӗнӗ пьесӑпа темиçе çулта пӗрре çеç савӑнтарать. Республикӑри драмкружоксем те çӗнӗрен-çӗнӗ пьеса кӗтеççӗ.

Литературӑпа искусствӑна ӳстерсе чечеклентерессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшса, Коммунистсен партийӗ пирӗн çул çинчи нумай чӑрмавсене сирсе парачӗ, драматурги конфликтсӑр пулмалла текен улталӑ та сиенлӗ «теорие» çапса аркатрӗ, писательсене искусствӑри типлӑх принципне марксистла ӑнланса илме пулӑшрӗ, пире художествӑлла творчествӑн пур жанрӗсене те, уйрӑмах сатира жанрне, аталантарса пыма чӗнчӗ. Парти пире творчество çулӗпе малтан малалла кайма яланах тӗрӗс çул кӑтартса парать, писательсене ӑнӑçлӑ ӗçлеме пур майсемпе те пулӑшать. Майсем çителӗклӗ, анчах лайӑх пьесӑсем сахал. Мӗншӗн? Çак ыйту паян пурне кӑмӑлне те хумхантарать.

Чӑваш совет писателӗсен Союзӗнче драматургсен чылаях пысӑк списокӗ пур. Драма секцийӗн руководителӗ Калкан юлташ нумай пьесӑсен ячӗсене хут çине пӑхмасӑрах каласа пама пултарать, çапах та ку вӑл драматургири ӗмӗр хару-тӑрӑва нимӗн чухлӗ те çӑмӑллатаймасть. Пирӗн мӗнле ӗçри пекех, драматургире те çитӗнӳсемпе çитменлӗхсем çыннисенчен килеççӗ, ӗçӗн ӑнӑçӑвне кадрсем татса параççӗ. Чӑн та, кадрсем пур пирӗн, анчах вӗсем çителӗксӗр ӗçлеççӗ. Халӑх паян драматургсене тивӗçлипех ӳпкелет: акӑ, «Айдар» авторӗ П. Осипов хӑйӗн пӗр кивӗ пьесине тӳрлетсе пичетлерӗ те çавӑнпа шӑпланчӗ: В. Ржанов «Энтип» драма хыççӑн çӗнни нимӗн те памарӗ; В. Алагер «Виçӗ хӗр» пьесине унччен «Икӗ юлташ» пьесинчен начартарах çырчӗ; Н. Айзманӑн та юлашки вӑхӑтри комедийӗсем кирлӗ висене çӗкленеймеççӗ; Н. Максимов-Кошкинский хӑйӗн кивӗ пьесисене юсаса ларнипех çырлахать; А. Калкан та «Сывӑх çӑлтӑрсенчен» урӑх малалла каймарӗ. Кусем — пирӗн паллӑ драматургсем. Халӑх умӗнчи пысӑк парӑма татас тесен, чи малтан вӗсен уйрӑмах çине тӑрса ӗçлемелле. Пире халиччен тунӑ нимӗнле ӗç те çырлахтарма пултараймасть.

Юлашки çулсенче пирӗн драматургсен йышне çӗнӗ вӑйсем хушӑнчӗç. Çамрӑк писательсен республикӑри канашлӑвӗнче эпир чылай пьесӑсем пӑхса тухрӑмӑр, вӗсен шутӗнче çаксем пурччӗ: А. Васильевӑн «1774-мӗш çулта», С. Павловӑн «Манас çук!», «Шурӑ кавакарчӑн», «Хаклӑ хӑна», Н. Терентьевӑн «Сирень аллейи», «Елкерен тусӗсем», Г. Власкинӑн «Ывӑлӗ патӗнче», «Икӗ председатель», Л. Родионовӑн «Сенкер кӳлӗ», «Юратнӑ хӗр», Г. Харламповӑн «Кайса курсан» тата ыттисем те.

Мӗн çинчен çыраççӗ-ха çамрӑк авторсем? Ытларах хальхи пурнӑç çинчен. Ку тӗрӗс, ку вӑл çапла пулмалла та. Çакӑнпа пӗрлех çамрӑксенчен историлле темӑсемпе интересленекенсем те пур. Жанр тӗлӗшпе илсе пӑхсан, çамрӑк драматургсем уйрӑмах комеди енналле туртӑнни сисӗнет. Сӑмах кунта чи малтан пӗр актлӑ комедисем пирки пырать.

Пӗчӗк формӑллӑ произведени çырасси те çӑмӑл ӗç мар. Драматурги законӗсем — пӗчӗк формӑллӑ пьесӑсемшӗн те, пӗчӗк формӑллисемшӗн те пӗр пекех çирӗп. Драма действийӗ пур çӗрте те пӗр пекех çивӗччӗн аталанса пымалла. Çамрӑк авторсем творчество ӗçне пӗчӗк формӑллӑ произведенисенчен тытӑнаççӗ пулсан, ку вӑл питех те тӗрӗс. Асталӑха чи малтан çавӑн пек туптама тытӑнмалла та ӗнтӗ.

Пирӗн драматургсем чылайӑшӗсем, пурнӑçри конфликтсене курса илсе, вӗсене хӑйсен пьесисенче тӗрӗс татса пама, характерсем сӳнласа илме, вӗсене художествӑлла майсемпе пуянлатса витӗмлӗ образсем тума, пьеса сюжетне йӗркелеме, драма действине малтан пуçласа вӗçне çитиччен тӑрӑнлатса, çивӗчлетсе пыма, пьесӑн пур элеменчӗсене те пӗр çирӗп композицие пӗтӗçтерме пӗлеймеççӗ.

Акӑ А. Васильевӑн «1774-мӗш çулта» пьесине илсе пӑхар. Кунта малтан пуçласа вӗçне çитиччен пыракан драма действийӗ çук, ун вырӑнне автор уйрӑм эпизодсем иле-иле кӑтартать. Пьеса çырӑнса кайнӑ чухне паларнӑ тӗп образсем (Рахмула Петӗрӗ, Ипутукан, Матрос т. ыт. те) малалла аталанаймасӑрах тухса-тухса ӳкеççӗ. Çавӑнпа та икӗ вӑй хушшинчи кӗрешӳ сцена çинче мар, ытларах сцена тулашӗнче пулса иртет. Композици, сюжет тӗлӗшпе сапаланчӑк пулни, драмӑри ӗçсем уйрӑм эпизодсем урлӑ аталанса пыни — çак пьесӑн тӗп çитменлӗхӗ.

Ку тӗлӗшпе Л. Родионов та хӑйӗн «Юратнӑ хӗр» ятлӑ çӗнӗ пьесине кирлӗ пек туса çитереймен. Чӑн та, автор питех те кирлӗ, кашнин кӑмӑлне хумхантаракан темӑсем хускатать. Анчах тӗп тема — çамрӑк ӑрӑва мораль тӗлӗшӗнчен пӑхса çитӗнтерес тема ытти нумай темӑсем хушшинче шуралланса юлать. Автор пьесӑри пуян материала пӗр çирӗп сюжет туса пӗтӗçтереймен, çавна пула драма действийӗ ӳссе, çивӗчленсе пымасть, картинӑран картинӑна чакса, хавшаса, йӑвашланса пырать, нихӑш картина та пӗрремӗш картина çӳлӗшне çӗкленеймест. Пьеса варринче пӗр персонаж (Саша) тепӗр персонажӑн (Анатолин) портретне курайманӑр çурса тӑкни тӗп интрига пулса тӑрать. Çапла автор хӑй сисмесӗрех пысӑк темӑран пӗчӗк интрига патнелле шуса анать.

Пурнӑçри конфликтсен тӗп никӗсӗ — çӗннипе кивви хушшинчи кӗрешӳ. Ку вӑл драматургире те çавӑн пекех пулмалла. Анчах пирӗн драматургире тӑшмансене, усал çынсене ытлашши айван та ухмах пек туса кӑтартасси пур-ха. Чӑн та ӗнтӗ, ухмах тӑшманпа кӗрешесси — йывӑр ӗçех мар, айван тӑшмана тӑрӑ шыв çине кӑларма та ӗç нумаях кирлӗ мар, — чее те улталӑ тӑшманпа кӗрешсе пӑх-ха эсӗ, — çакӑн пек кӗрешӳре кӑна пирӗн малта пыракан çынсен ӑсӗ те, кӑмӑлӗ те витӗмлӗнрех палӑрать. Ку тӗлӗшпе С. Павловӑн «Хаклӑ хӑна» комедийӗ пирки пӗр-ик сӑмах каласа хӑвармалла. Пӗтӗмӗшпе ку вӑл — начар мар комеди. Анчах автор ӑнӑçлӑ карьериста Фетюхина ытлашши айван пек туса кӑтартнӑ. Фетюхинсем пурнӑçра чее пулаççӗ, мӗн чухлӗ чеерех вӗсем — çавӑн чухлӗ хӑрушӑрах. Çакна асра тытса çырнӑ пулсан, Павловӑн комедийӗ тата çивӗчрех те лайӑхрах пулатчӗ.

Пӗчӗк комедисем çырас ӗçе çамрӑк автор Н. Терентьев самай ӑнӑçлӑ тытӑнать. Ку тӗлӗшпе унӑн «Елкерен тусӗсем» ятлӑ пӗр актлӑ комедине палӑртмалла. Анчах çамрӑк авторӑн чӗлхе асталӑхӗ çитеймест-ха. Акӑ, сӑмахран, унӑн «Сирень аллейи» ятлӑ пьесинчи пӗр геройня — Зоя мӗнле чӗлхепе калаçать:

«Наукӑна кашни çын хӑй пӗлнӗ пек ӑнланать. Ирӑшӑн наука пирӗн колхозри пек вӑрманлӑ уй тӑприллӗ çӗре 20 сантиметр тарӑнӑш сухалама хушать, пирӗн шутпа — эпир вӑл вырӑна 32—33 сантиметр тарӑнӑш сухаламалла. Ира 20 сантиметр тарӑнӑш сухаланӑ ана çине сапнӑ удобрение эпир 33 сантиметр тарӑнӑш сухаланӑ ана çине сапсан, гектартан 140 пӑт мар, 180—200 пӑт тыра илӗпӗр».

Ытти геройсен чӗлхи те кунтан пуян мар. Çапла вара сантиметрсемпе гектарсем, пӑтсемпе центнерсем пирки вӗçӗ-хӗррисӗр тавлашнӑ хыççӑн, пьесӑри Матвей мучи Ирӑпа Ваньӑна, Зойӑпа Бориса юнашар тӑратать те мӗнпур «юрату проблемисене» татса парать.

Çук, пирӗн совет çыннисен шухӑш-кӑмӑлӗсем кун пек чухӑн мар, вӗсем пуян, вӗсене кӑтартса пама илемлӗ те витӗмлӗ чӗлхе кирлӗ. Чӗлхе тени пирӗн чылай драматургсен чухӑнрах-ха.

Кунта эпир драматургин уйрӑм ытти ыйтӑвӗсем пирки кӑна сӑмах хускатрӑмӑр. Пирӗн чи кирлӗ те чи пысӑк ӗç вӑл — театрсемпе драмкружоксем валли лайӑх пьесӑсем çырасси. Темӑсем вӗçӗ-хӗррисӗр пуян. Совет халӑхӗн пурнӑçӗ пире çӗнӗрен-çӗнӗ шухӑшсем парса тӑрать. Партин Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ постановлени, ун хыççӑн партипе правительство йышӑннӑ решенисем пирӗн творчествӑлла шухӑшсене татах та ытларах хавхалантарса çӗклеççӗ.

Драматургсен творчествӑлла активлӑхне ӳстерес ӗçре писательсен Союзӗнчи драма секцийӗ пысӑк вырӑн йышӑнма тивӗç. Анчах халӗлле ку секци тӳсме çук япӑх ӗçлет. Кунта çӗнӗ пьесӑсене вӑхӑтра пӑхса тухмаççӗ е сиелтен кӑна сӳтсе яваççӗ. Хӑшпӗр «критиксем» пьесӑри çитменлӗхсем пирки автора тӳррӗн калас вырӑнне «тусла» ытлашши мухтама тытӑнаççӗ. Тепӗр чухне тата автора «çапса хуçас» йӑла та пур. Ытлашши мухтасси е çапса «хуçасси» вӑл критика ӗçӗ мар. Пирӗн драматургсен пӗр-пӗрне юлташла, тӳрӗ кӑмӑллӑн критиклесе пулӑшмалла.

Писательсен Союзӗнче çамрӑк авторсене пулӑшас ӗçе уйрӑмах япӑх йӗркеленӗ. Кун пирки çамрӑк писательсен республикӑри канашлӑвӗнче писательсен Союзӗн правленине хыттӑн критиклерӗç. Пирӗн çитӗннӗ драматургсем те çамрӑксене кирлӗ пек пулӑшмаççӗ. Акӑ пӗр тӗслӗх. Тин çырма пуçлакан автор Иван Кузьмин «Ылтӑн саваланчӑк» ятлӑ пьеса çырнӑччӗ. Чӑн та, пьесӑра çитменлӗхсем чылай пулнӑ. Авторне пулӑшма тесе, писательсен Союзӗ Н. Айзман драматурга хушнӑччӗ. Мӗн пулса тухнӑ-ха çав пулӑшуран? Çитӗннӗ драматург Айзман çамрӑк авторӑн пьесинчен водевиль пекрех япала туса хунӑ, произведени ӑшчикӗ вара пуянланас вырӑнне пушанса юлнӑ.

Писательсен Союзӗнче çамрӑк авторсене пулӑшас ӗçе тӗпренех лайӑхлатмалла, вӗсене хӑйсемшӗн çырса мар, тӗрӗс кӑтартусем парса пулӑшмалла.

Пирӗн драматургсем, «ваттисем» те, çамрӑккисем те, пӗрле тачӑн çыхӑнса ӗçлесе, совет халӑхӗн пурнӑçне тата литература асталӑхне тимлӗн вӗренсе пырса, çӗнӗ пьесӑсем çырӗç, хамӑрӑн драматургие çӳлӗрех пусӑма çӗклӗç, çапла вара совет халӑхне коммунизм тӑвас ӗçре пулӑшӗç.

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

Юлашки çулсенче çӑкӑр заводӗсенче нумай ӗçсене механизациленӗ. Механизаци ӗç тухӑçлӑхне ӳстерме май парать тата ӗçе çӑмӑллатать.

УКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Чапаевски поселокри çӑкӑр заводӗнче. О. Петрова юлташ машинӑпа чуста çӑрать.

Ф. ИВАНОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Ялти врач шкулта

Юлашки вӑхӑтра медицина работникӗсем шкулсене çӳресси йӑлана кӗчӗ. Вӗсем шкулта эрнере пӗрре «шкулти профилактика кунне» ирттереççӗ. Вӗренекенсен сывлӑхне упрассипе тата чирлисене вӑхӑтра сыватассипе йӗркелени питех те кирлӗ ӗç пулса тӑрать.

— Халӗ ӗнтӗ шкулта,— тет Урмашри больницӑн главнӑй врачӗ Николай Андреевич Андреев,— тӑватсӗр вӗренекентен пӗри те трахомӑпа чирлемест. Ытти чирсем ересрен те сыхласа, сӑнаса тӑратпӑр. Вӑхӑтра пулӑшу парасси питӗ кирлӗ.

...Акӑ, хӗрача врач умӗнче тӑрать. Унӑн куçӗнчен куççулӗ юхса анма ла тӗр.

— Доктор, мана йӗлтӗрпе ярӑнма юрать-и? Эпӗ халӗ пачах сыва! Ну, кашт ангина пулнӑ та, мӗнех ара? Пулнӑ та иртнӗ!

Ангина пулнӑ та иртнӗ... Çавах та врач унӑн чӗри кашт тӗрӗс мар тапнине чухлать.

— Эсир, Ольга Ефимовна, мӗнле шутлатӑр?

Ольга Ефимовна Ефимова опытлӑ фельдшерица. Унӑн витӗр куçӗ сывах мар ачана часах уйӑрса илет.

— Ан васка, хӗрӗм,— тет вӑл.— Малтан сывалса çитмелле, кайран мӗн чухлӗ ярӑнас килет, çавӑн чухлӗ ярӑн.

Профилактика — врач ӗçӗнче чи кирли. Врач Н. А. Андреев çак кирлӗ ӗçе мӗнпур классенче ирттерме тытӑнчӗ. Вӑл ачасен куçӗсене, сывламалли органӗсене пӑхса тухрӗ. Унтах сыватмаллине те палӑртрӗ: майсене кварцпа сӗрессине, кирлӗ пек физкультура режимне ӑнлантарчӗ.

Учительсемпе медицина работникӗсем пӗр-пӗринпе çирӗп çыхӑну тытаççӗ. Врач Н. А. Андреев час-часах учительсемпе вӗренекенсем хушшинче лекцисемпе докладсем ирттерет. Нумай пулмасть вӑл ачасен анатомилле-физиологилле уйрӑмлӑхӗсене, режим, гигиена тата физкультура çинчен калаçу ирттерчӗ. Учительсемпе вӗренекенсем тата ачасен ашшӗ-амӑшӗсем ялти медицина работникӗсене чӗререн тав тӑваççӗ.

П. ЭЛЬКИНСКИЙ.

Сӗнтӗр районӗ.

Полина Русинӑна хӳтӗлесе

Пантелеймон Кириллович Русинпа Феодосия Яковлевна Яковлева иккӗшӗ те учительсем пулнӑ. Çамрӑк ӑрӑва тӗрӗс воспитани парасси çинчен сахал мар калаçнӑ вӗсем, çынсене аса вӗрентсе ларасем те тунӑ. Ачасене пӑхса ӳстерес, воспитани парас ӗçре ашшӗ-амӑшӗн тивӗççӗ çинчен питех те калаçма юратнӑ. Çав вӑхӑтра, 1939 çулти пӗр ырӑ кун, Феодосия Яковлевна ача çуратса панӑ. Ана Полина ят панӑ. Полина ашшӗ — Пантелеймон Кириллович Русин.

Ача ашшӗ — П. Русин Шупашкара ӗçлеме куçнӑ та ашшӗн тивӗçӗ çинчен пӗтӗмпех манса кайнӑ. Унта вӑл пӳрт туяннӑ, авланнӑ.

1940 çулти сентябрӗн 23-мӗшӗнче Красноармейски районӗнчи халӑх сучӗ П. Русина ялта унӑн ача пурри çинчен аса илтерет, унтан алимент шыраса илмелле приговор йышӑнать. Закон, ачана хӳтӗлесе, ӑна лайӑх пӑхса ӳстермелле тӑвать. Анчах П. Русин ашшӗ тивӗçне пурнӑçлассинчен пур майсемпе те пӑрӑнма хӑтланать. Сайра хутра çеç укçа парса пулӑшкалать.

Полина ӳсет. Амӑшӗ — Феодосия Яковлевна — учительница пулни те тӑван ачинчен пӑрӑнать. Ача ашшӗ йӗркеллӗн пулӑшманшӑн тарӑхса, вӑл çичӗ çулхи Полинӑна Шупашкара ярать. Ачана Ленин урамӗнчи П. Русин пурӑнакан 25-мӗш çуртӑн хапхи умне тӑратса хӑвараççӗ. Ку ӗç 1946 çулта пулнӑ.

Полина — тӑван ашшӗ килӗнче. Йӗркеллӗ пулсан, ӑна кунта юратса пӑхмалла. Русинӑн çемьере урӑх ача-пӑча çук. Унӑн арӑмӗ Мария Михайловна, ача садӗнче воспитательница пулса ӗçленӗскер, ӑшӑ кӑмӑллӑ, ачана юратма пӗлекен хӗрарӑм тесе шухӑшламалла. Çук, чунсӑр çынсем пулса тӑраççӗ вӗсем Полинӑшӑн. Татӑк çӑкӑр лекмест ӑна сӑмахсӑр. «Тӑван мар анне мана Виктор Гюго çырнӑ произведенире çырнӑ Козеттӑна пӑхнӑ пек пӑхма пуçларӗ,— тесе çырать Полина.— Атте ӗçлеме тухса кайсан, киличчен çитерместчӗ. Атте çине чӗнсен, анне: «Эпир халӗ çеç çирӗмӗр», тетчӗ те эпӗ сӗтел хушшине пӗрсе ларайман. Хам çав тери выçӑ. Тепӗр чухне эрнипех выçӑ-тутлӑ пурӑнаттӑм. Вӗсем патне ялтан килнӗ çынсем хваттере нумай кӗрсе выртаççӗ. Таврапус вӗсене, çавсем çитеретчӗç. Çавӑнти пушалла пурнӑçпа эпӗ чирлерӗм. 1948 çулта мана хамӑн анне йӑмӑкӗ — Клавдия Яковлевна Смелова хӑй патне илчӗ. Вӑл Муркашри вӑтам шкулта учительница пулса ӗçлет».

— Провокаци, пӗтӗмпех суя! — тет П. Русин çак сӑмахсене аса илтерсен. Вӑл нимӗн те йышӑнмасть. Полина пылпа çу çинче пурӑннӑ пек сӑнласа кӑтартать.

Унтанпа сахал мар вӑхӑт иртрӗ. Полина 14 çула кайрӗ. Халӗ вӑл Муркашри вӑтам шкулта VII-мӗш класра вӗренет, учительсем каланӑ тӑрӑх лайӑх вӗренет.

Тӑван амӑшӗ çак районтах Очӑкассинчи çичӗ çул вӗренмелли шкулта вӗрентет.

П. Русин темиçе çул ӗнтӗ ачине пӑхса усрама алимент укçи тӳлемест.

— Мана Шупашкар хулан прокурорӗ пулнӑ Пучков хӑй патне чӗнчӗ те, алиментран хӑтарас тесе каларӗ. Унтанпа никам та пӗр сӑмах та шыраман пулчӗ,— тет вӑл хӑйне тӳрре кӑларма хӑтланса.

Полина хӑйне пулӑшма ыйтса хулари прокурор патне те, республикӑри прокуратурӑна та çырнӑ, ашшӗ ӑçта, мӗнле пурӑннине те кӑтартса панӑ. Анчах тивӗçлӗ пулӑшу илеймен.

Акӑ республикӑри прокуратурӑра 950 номерлӗ ӗç выртать. Хуплашки çине «Начато 9 ноября 1953 г. Окончено 12 ноября 1953 г. на 9 листах» тесе çырнӑ. Ку Полина Русина ӗçӗ. Унта прокуратурӑна çырнӑ çыру, прокурор, республикӑри Юстици министрӗн заместителӗ Валков юлташ çырнӑ хутсем. Мӗн çыраççӗ вӗсем?

П. Русинран алимент шыраса илмелли исполнительнӑй лист Шупашкар хулинчи халӑх сучӗсенчен пӗринче тасты «çухалнӑ» имӗш. Кам, хӑçан, ӑçта çухатнӑ,— паллӑ мар.

— Шыраса тупмалла, халех шыраса тупмалла,— тесе çырать Юстици министрӗн заместителӗ Валков юлташ.

— 1951 çулччен исполнительнӑй лист Тарпромсоюзра пулнӑ. Эпир ӑна иккӗмӗш участокри халӑх судне панӑ,— ӗнентереççӗ Тарпромсоюзра ӗçлекенсем.

— Пирӗн патран вӑл хут ултӑмӗш участокри халӑх судне куçнӑ,— кӑтартаççӗ унта ӗçлекенсем.

Йӗр Шупашкар хулинчи 4-мӗш участокри халӑх сучӗ патне илсе çитерет.

— Э-э-э, унтанпа виçӗ судья, иккӗ исполнитель улшӑнчӗ. Вӑл хута иккӗлле те шыраса тупма çук,— терӗ пире çак участокри халӑх судьи Б. Федоров юлташ çак ыйту пирки сӑмах хускатсан.

Çавӑнпа йӗр вӗçленчӗ. Çапла судпа прокуратура органӗсенче те Полина Русинӑна законлӑ правӑпа хӳтӗлесси халӗ те вӗçленмен-ха. Пуçланӑ ӗç çине «Окончено 12 ноября» тесе çырса хума иртерех. Исполнительнӑй листа тупса, е çӗнӗрен илсе, тӳлеме тивӗç çулсемшӗн укçа шыраса илмелле.

Ача ашшӗ П. Русин темӗн тӗрлӗ те хускаланать.

— Полинӑна питӗ юрататӑп, пулӑшма яланах хатӗр.

— Полина манӑн ача мар,— тет вӑл çав вӑхӑтрах тӗрлӗ ыйтусем парсан. Вӑрçӑ çулӗсенче тӳленӗ алимент укçисен квитанцийӗсене пухса «дело» тунӑ, пӗрле РСФСР Уголовнӑй кодекс кӗнекине хунӑ. Анчах ача ашшӗн тивӗçӗ çинчен калакан статьяна вуламасть вӑл.

Эпир Полинӑн тӑван амӑшне Ф. Яковлева учительницӑна та тӑван ачине воспитани парас ӗç çине сиелтен пӑхнӑшӑн айӑплатпӑр. Ачана тӗрӗс воспитани парас ӗçрен аякра пӑрӑнса тӑни — совет гражданинне, учительницӑна тивӗçсӗр ӗç.

Судпа прокуратура органӗсенче ачасен интересӗсене сыхлас тӗлӗшпе чунсӑррӑн ӗçлени, документсем çухални те питӗ кӳренмелле факт.

М. НИКОЛАЕВ.

Тӗрӗслеме янӑ çырусем тӑрӑх

«Коммунизм ялавӗ» хаçат редакцине Чурачӑк районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз правленин председателӗ Никитин тата бригадирсем Гордеевпа Сергеев япӑх ӗçлесе колхоза сиен туни çинчен пӗлтерекен çыру килнӗччӗ. Çырӑва редакци тӗрӗслеме Чурачӑкри МТС директорӗ патне янӑччӗ.

Чурачӑкри МТС директорӗ çырура кӑтартнӑ фактсем тӗрӗсси, çитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнни çинчен пӗлтерчӗ. Хӑйсене шанса панӑ ӗçсене тивӗçлипе туса пыманшӑн, колхоза сиен тунӑшӑн Никитина, Николаева, Гордеева, Сергеева ответ тыттармалла, колхоза тӑвак кунӗшӗн вӗсене укçа тӳлеттермелле тунӑ.

Стихван ШАВЛЫ

Октябрь поэми

Стихван Шавлы юлашки вӑхӑтра «Октябрь поэми» ятлӑ çӗнӗ произведени çырса пӗтерчӗ. Вӑл тӑван халӑхӑн асапра иртнӗ кун-çулӗпе унӑн паянхи мухтавлӑ ӗçӗсем çинчен каласа парать. Паян эпир çав поэмӑн пуçламӑш сыпӑкӗсене пичетлетпӗр.

Шупашкартан тухрӑм, тӳрех утрӑм,
Атӑл тӑвайккийӗ çине ухрӑм.
Акӑ куçӑм умӗнче чӑваш çӗрӗ,
Тӑван çӗршыв таврӑ чунӑм вӗçрӗ.

ÇЕÇПӖЛ Мишши.

I.

ЕТӖРНЕ ÇУЛӖ

Инçе -
Тӑсӑлать çак шоссе.
Буран,
Хӳтлет ӑна вӑрман.
Лере — пустав пек хир,
Парка ыраш, модка пек вир.
Лере — ял хыççӑн ял.
Йӑмралӑ.
Сарлӑ.
Шӑхӑр кал-кал.
Чупать шоссе,
Хӗвел çинче çиçсе.
Касать Сӑр кӗперне,
Вара — Етӗрне.
Анчах
Шоссе чупать çаплах,
Шӑр чарӑкна касать.
Ак Горький.
Владимир.
Мускав.
Кай малалла —
Калинин хули.
Мӑнаçлӑн курӑнать
Гранитлӑ Ленинград.
Инçе, инçе
Каять шоссе.
Хусан енне кунтан,
Каять вӑл ӑшшӑ енелле таран.
Чупать. Шӑвать.
Касать вӑл пӗтӗм Çӗршыва.

ХУРӐН ÇУЛ

Ишет çак машина.
Сиккет чӗрӗ, юрлать чун.

Чӑшӑлтатса пырать асфальт,
Юпа та лав юлать вӑльт-вальт!
Тӑхта
Пӗр вӑхӑта:
Калайкасси панчен тӳрех
Эс пӑрӑн Сӗнтӗре,
Асли авалхине пӑртак,
Ун урлӑ каçнӑ аслӑ тракт.
Пӗч-пач курӑтӑн ватӑ хурӑн,
Ларать вӑл шухӑшлӑн та хурлӑн.
Сӑна, хупни те ун çаралнӑ,
Турачӗ хуçӑлнӑ, сайралнӑ.
Вӑл халь
Çакмасть сип-симӗс шаль,
Ӑна çиçсем, çулсем хӗскенӗ,
Вӑхӑтӗнче вӑл ашкӑрнӑ, кашланӑ.
Ак тепӗри... кӑвар хуратнӑ,
Ун тӑррине аçа шартлатнӑ.
Виççӗмӗшне сӑна, вӑл усӑк,
Çӑра турачӗ те ун хуçӑк.

Тӗпчен эс шофертан:
«Кала, тӗн эс чухлан,
Çак çул хӗрне
Çак хурӑнсен ретне
Кам лартнӑ-ши, хӑçан?»
Шофер тени вӑл тарават,
Газ чакарать те калать:
«Çак пат ӗлӗкха çак çул хӗрне
Лартнӑ, теççӗ, Екатерине.
Чӑваш ӑна — эс пӗлнӗ пуль —
Расна ят панӑ: «Хурӑн çул».
«Владимирка» — ят хунӑ вырӑс,—
Ак ун ури, куçна та кӗрӗс».

Вара пуçтӑрӑн шухӑша,
Умна тухать майра патша,
Вӑл çурӑлас пек самӑр,
Вӑл пуян,
Росси — чухӑн, тинӗшӗ те ырхан.
Сӗлен пек шӑхӑрать тӳре пуçне.
Виçесӗр пысӑк «хура халӑхӑн» нушине,
Тӑпра йӑтать, лартать шур хурӑн,
Нӑшӑлтатать хӑй: «Ӗмӗр пурӑн!
Эс ӳссине
Курайманӑр эпир,
Каштанине
Илтеймӗпӗр эпир.
Ан ман пире —
«Хура çӗре».
Ик айккипе икшер ӗрет —
И кун иртет, и çӗр иртет —
Сана эпир-ске лартрӑмӑр.
Ан хӑр тесе,
Сӗкнӗ тесе,
Куççульпеле шӑвартӑмӑр...»

...Шавлаççӗ йӑрӑс хурӑнсем,
Вӑшӑлтатаççӗ ӑш çилсем.
Вило шӑрши туйса, çӑхан
Ирех кӑранклатать паян.
Ак Хурӑн çулӗ мӑкӑрланчӗ,
Тавралӑха тусан капланчӗ.
Чанклатнӑ сасӑ илтӗнет,
Сӑна, «ристан пулкки» килет.
Вӗсем çинче ула халӑт,
Урисенчен чӗр юн тапать.
Сенкер тумтирлӗ утлӑ çар
Хыçран пырать: пӗри ан тар,
Тарайӑн. Пышӑл çав хурал!
Кашт пӑрӑн: хаплатать пӑшал.
Хресчен пырать-и çулпала,
Часрах чупать вӑрманалла.
Ан куртӑр куç, пӑхма сехер,
Тытса та кайӗç-и темскер?
Ял-йыш та пытанать тарса,
Хӑлхисене чаракласа.
Ача-пӑча çеç кумӑйччен
Пӑхать çатан шӑтӑкӗнчен.
Çӳçрен туртаççӗ ашшӗсем:
«Сире, сире, шӑмӑрлансем!»,
Шӑлсе килет ача-пӑчан,
Кун пекки вӗсем курман.
«— Атте, çав мӗскӗнсем кун-каçӑн
Ӑçта кайса çӳреç таккассӗ?
— Инçетелле,
Сӗпӗрелле.
— Камсем-ши çав тимӗрлисем?
— Пуç ачисем.
Рассей ывӑлӗсем».

РАДИЩЕВ ТАВРӐНАТЬ

Кун хыççӑн кун,
çул хыççӑн çул иртет.
Мӑн çул çаплах-ха кӑтӑ пек вӗркет.
Хурал пӑхмасть каçа-ире,
Ун çулӗ паллӑ — Сӗпӗре!
Кам çеç иртмест-ши çак çулпа?
Тиек иртет, чечук — пупла.
Уретникпе страшник иртет:
Саккун «йӗрке» кӳрсе çӳрет.
Иртет чиновник — бюрократ,
Хӗрес те çӑлтӑр ялтӑрать.
Иртет улпуç, иртет купца,
Хак ӳснӗшӗн хӑх-хӑх кулса.
Иртет улпут, иртет ӳсламçӑ,
Иртет хуçи тирпенӗ тарçӑ.
Пуш хутаçпа аран-аран
Сӗнксе иртет ыйткалакан.
Çул хӗррине йӑшӑнарах.
Кас-кас иртет вӑрӑ-хурах.
Хӑш-хӑш чухне иртет патша —
Росси халӑхӗн нуши.
Çул — ансӑр мар, çул сарлака,
Шутла, пӗр хӗрӗх картлашка.

Нимех те мар-мӗн çул синки!
Васкавлӑ пуштӑ павуски
Шанкӑртатса иртех тӑрать,
Ниперӗ пысӑк-ске ара!
Мӗн çӳретет-ши почтальон?
Хаçат, çыру-мӗн пур-ши ун?
Мӑсӗр калас? —
Указ çине указ,
Приказ çине — приказ!
Савна — тытӑс,
Савна — хупас!

Иртет салтак, иртет некрут...
Ӑçта хушаççӗ — ут та ут!
Ялсем юлаççӗ макӑрса,
Тӑварлӑ куççульне тӑкса.
Йӗрет Шемшер, Юртукасси...
Тата мӗн пур-ши курасси?
Илтет ахлатнӑ сас ӑна:
Ах, самана! Ах, самана!

Анчах Атӑл хӗррине,
Итлер бурлакӑн юррине.
Юрри кӑштах ун савӑк мар-ши!
Килет ав анатран пӗр барка.
Килмест,
Ӑна çынсем туртаççӗ,
Хула çӳçне вышлать кун-каçӑн,
Пӗр çын, çав барка сӑмсинчен
Куçне илмест çыран çинчен.
Хӑй туртӑччӗ анса,
анчах
Вӑй-халӗ пӗтнӗ ун пачах.
Вӑл Сӗпӗртен калле килет,
Хӑй ватӑлнӑ, хӑй ӳсӗрет.
Ӑна пӗр кӗнеке çырнишӗн,
Ӗççен хресчен хутне кӗнишӗн
Асатнӑ пулнӑ сив енне,
Тайган хатарлӑ вӑрманне.
Пӑхать ялсем çине пӗр хушӑ
Çара.
Анкартисем те пушӑ.
Машмар вӑл,
астӑвать:
Петербургпа Мускав хушши...
Ӑна çунтарнӑччӗ
хресчен нуши.
Кунта та пусмӑрах курать,
Чӑвашӑн та çавах инкекӗ,
Тен пысӑкрах та пуль инкекӗ?
Ун пӳрчӗ те хутра, хура,
Ыхан кӑварӗ, çӗмӗрт пек, куçра,
Ӑçтан вӑл пулӑшӗ ӑна? —
Хӑйне те сыхлӑ самана.
Пуçне лӑшт! усрӗ,
шухӑшӗ касать...
Сасартӑках юнать каяк:
«Эй, ваттӑрши улпут!
Сӑну çиллес.
Эс халь те юта».
Радищев хӗрлӗ чышкине...

Ак çитрӗç Шупашкар тӗлне
Тарлатӑ-пӑçӑ бурлаксем,
Кӑкарчӗç баржине.
Хӑйсем
Хӑпарчӗç тӗмлӗ çырана,
Хӑпарчӗç,
сӗнкӗрӗç хулана.
Мӗн кирлӗ çак мӗскӗнсене,
Асап таптанӑ чунсене?
Кам калать, кам калать катӑр-ха;
Ӑçта вӗсем хурас-ха тарӑха?
Хупах [illegible] вута,
Йӑлӑнтарать,
кашт пусарать пӗр вӑхӑт.
Хуçи (килет вӑл Уралтан,
Вӑл тимӗр кӳрет унтан)
Тӑрать ӗçхӗкленсе;
— Атьсем,
[illegible]!
Чӑваш [illegible].
Ак [illegible],

Кӑштах çыртсаар та, калле уттарӑр,
Ӑçта-ха енчӗкӗр
пӑхам:
Пыльнёкӑра ӗçтерӗп хам.—
Радищев та анса утать
(Хурлӑ хыçалтах пырать).
Инçах те мар иккен — пасар,
Хура тӑвар.
Шур пир.
Пуспа-тавар
Пӑхать,
куçа тытать пӗр хушӑ
Тӗрлӗ-тӗрлӗ пӑрахнӑ пушӑт,
Нумай-мӗн тӗрлӗ çӑпата те.
Сырать ӑна ватти,
сырать ватти те.
Пӗвлӗх-мӗнлӗх — мунчала.
Кунласан, вӑл ту та пулмалла,
Сӗс-кантӑр кӑшалӗ — сӑрт пек,
Хӗрсем ларасçӗ йӗркипе,
Сутаççӗ сарӑ-сарӑ майӑр;
— Илсемӗр!
Питӗ ӳпӗ!
Мӗйӗр! —
Пасар сӗрлет.
Пасар вӗрлет.
Чӑвашӑн, çармӑсӑн чӗлхи
Пӗр шав пулса тӑрать кайки,
Илтӗнкелерӗ хулӑн сас.
Кӑрӑтавуй çӳрет пулас.
Шӑхать Радищев:
чухӑн халӑх,
Мӗнпур тупри пӗрер сутмалӑх.
Шухӑшласа утать вӑл калла:
«Хӑй пӗчӗк те,
ун чунӗ пысӑк пулмалла».
Хускалчӗ,
[illegible] барка:
[illegible]
[illegible]
Хӑйсем —
[illegible]
[illegible]
Радищев [illegible]
Каллех [illegible]
«Çапла [illegible], Росси
[illegible]»
[illegible]
Çул [illegible]
[illegible]
Çул [illegible]
[illegible]
[illegible]

Тĕнчери лару-тăру

ИРТСЕ КАЙНАН ÇУЛĂН ХĂШПĔР ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Çĕнĕ çул çитмен-ха, çапах та буржуазла хаçатсем тахçанах ĕнтĕ малашнехи ĕçсем мĕнле пулассси çинчен тĕрлĕрен сăмах ваклассĕ. Çавна май хальхи, 1953 çула кĕтсе илнĕ чухне капитализм тĕнчинче, малашлăх пирки каланă сăмахсем çинчен аса илни вырăнлă.

США суту-илӳ министерстви, сăмахран, ятарласа хатĕрленĕ докладра американецсене: 1953 çул пуринщĕн те «лайăх бизнес тумалли тепĕр çултанлăх пулĕ», тесе шантарнă. Америка хушнипе пурнăçласа пыракан Ли Сын Ман хăй 1953 çулта Ялуцзян юханшывĕ патĕнче пулассси, çапла вара Демократиллĕ Корея Халăх Республикине тĕп тăвасси çинчен шантарса каланă. Хĕвеланăç Германире Аденауэр (вăл та Америка хушнипе пурнăçласа пырать) çĕнĕ çул ячĕпе США президенчĕ патне янă çырура çирĕппĕн çакна шанса тăнине палăртнă: 1953 çулта «Европа çарне» туса хурĕç, çапла вара гитлерла вермахт тепĕр хут çĕкленесси пурнăçа кĕрĕ, тенĕ.

«Малашнехине палăртса» каланă çак сăмахсенче, паллă ĕнтĕ, ку сăмахсене калакан «пророксен» шухăш-ĕмĕчĕсем палăрнă. Вĕсем тĕнчери лару-тăрăва сивĕчлетессишĕн тăнă.

Фактсем çакна кăтартса параççĕ: малашлăх çинчен çавăн пек калаçнисем пуш сăмах кăна пулнă. Вăрçă çинчен, вĕçĕмсĕр шавласа васкаса хĕçпăшалланни çинчен сăмах пуçласа пулсан, ку вăл Америка монополисчĕсене çывхарса килекен кризисран çăлса хăварма пултараймасть. Иртнĕ президент суйлавĕнче демократсен партийĕ тăратнă кандидатăн Стивенсонăн декабрĕн 12-мĕшĕнче Филадельфире тухса каланă чухне çакна палăртма тивнĕ: «Енер ырă шанчăксем пулнă пулсан, паян ĕçсем хурлăхлăн пăтрашăнса кайрĕç... Кризис умĕнче хăраса тăни вăл—тĕрĕс шиклĕх. Кризис фермерсене пырса лекрĕ те ĕнтĕ...»

Кăçалхи çулларан пуçласа США-ра промышленность производстви уйăхран-уйăха чакса пырать, çĕршер пин рабочисене ĕçрен кăларса-кăларса яраççĕ. Ĕçри активлăхăн индексĕ, «Бизнесуик» журнал кăтартса панă тăрăх, 1953 çулхи çуркуннерен пуçласа улттă процент чакнă. Автомобильсем, ялхуçалăх машинисем, килçуртра кирлĕ япаласем туса кăларасси, тĕслĕ металсем кăларасси, çĕнĕ строительство вĕçĕмсĕр чакса пырать. Сăмахран, кăçалхи ноябрь уйăхĕнче автомобильсем туса кăларасси, иртнĕ çулхи ноябрьпе танлаштарсан, 17 процент сахалтарах пулнă.

«Юнайтед Стейтс ньюс энд Уорлд рипорт» журнал, правительствăран илнĕ хыпарсем тесе, çапла паллă тăвать: «тавар запасĕсем пуханни çĕнĕ чăрмав пулса тăрать. Çак запассем заводсенче нихçанхинчен ытларах ӳссе кайнă. 46.400 миллион доллара çитнĕ. Çав вăхăтрах шалти рынок вĕçĕмсĕр пĕчĕкленсе пырать, мĕншĕн тесен ĕççыннисен наци тупăшĕнчи пайĕ тăтăшах чакать. Журнал илсе кăтартнă сведенисем тăрăх, рабочисемпе служащисен çулталăкри ĕç укçи, Корейăри вăрçă вăхăтĕнчи «бум» чухнехипе танлаштарсан, 1,6 миллиард доллар чухлĕ чакнă. Фермерсен тупăшĕсем тата ытларах чакнă. Фермерсене тахçантанпах ĕнтĕ кризис хĕсет. Фермерсен тупăшĕсем 10 миллиард доллар ытла чакнă. Çав вăхăтрах пурнăç хакĕ çак тапхăр хушшинче 15,2 процент ӳснĕ, хĕçпăшалланас çĕре каякан налогсем те ӳснĕ. Ĕç тупайман çынсен йышĕ те хушăнсах пырать. Ноябрь уйăхĕнче кăна, чакарса кăтартнă официальнăй сведенисене илес пулсан та, ĕç тупайманнисен хисепĕ 300 пин çын чухлĕ ӳснĕ.

Капитализм тĕнчинчи ытти çĕршывсем те экономикăлла йывăрлăхсене пула аптраççĕ. Вăл çĕршывсенче хаксем пысăк пулнă пирки, ĕç тупайман пирки, эксплуатаци вăйланса пынă пирки халăх асапланать. Англире налогсем, вăрçăччонхи тапхăрпа танлаштарсан, пилĕк хут, апат-çимĕç продукчĕсен хакĕ юлашки икĕ çул хушшинче кăна 25—50 процент ӳснĕ. Италире, Рим таврашĕнчи вырăнсенче, пиншер çынсем çĕр шăтăкĕсенче пурăнаççĕ.

Ĕççыннисем çакăн пек йĕркесемпе килĕшесшĕн мар. 1953 çул хушшинче США-ра кăна 5.100 забастовка пулнă. Металла руда промышленноçĕнчи горнякĕсен тата металл шăратакан рабочисен независимăй профсоюзĕн исполкомĕ, сăмахран, пурнăçа пуçласа пулкасть хаçатсенче пичетлесе кăларнă заявленире çапла пĕлтернĕ: исполком ĕçсен программине вырăнлă, çав ĕçсен тĕллевĕ «экономика пĕтĕмĕшле юхăнса çитессин хăрушлăхĕн паллисем палăрнă май, çав хăрушлăха хирĕç, çавăн пекех халăхи вăхăтри экономикăлла кризиса хирĕç» кĕрешме хатĕрленесси пулать. Заявленире малалла çапла каланă: «1930 çулсенчи кризис хыççăн—США-н пĕтĕм хĕвеланăç пайĕнче чылай хуласенчи рабочисем ĕçсĕр тăрса юлчĕç тата вак предприятисен хуçисем банкрута тухрĕç. Промышленноçăн анир ĕçлекен отраслĕнче пиншер рабочисене ĕçрен кăларса яраççĕ. Ытти рабочисен ĕç кунĕ тата ĕç укçи чакать. Теприсем ĕçсĕр тăрса юлас тата укçа ĕçлесе илме пултарайман хăрушлăх умĕнче тăраççĕ, мĕншĕн тесен кризис промышленноçăн ытти отраслĕсенче те сарăлма тытăнать... Хура тăхлан тата цинк кăларакан рудниксенче кашни виççĕ рабочирен пĕрне ĕçрен кăларса янă».

Çак условисенче Америка монополийĕсем США-н «кĕçĕн партнерĕсене» тата ытларах хĕсме требовани лартаççĕ. Çапла, сăм промышленноçĕнчи предприяти хуçисен ассоциацийĕ çак кунсенче çапла пĕлтернĕ: США-н суту-илӳпе тариф политикине пăхса тухнă чухне США-н хăйĕн «нушисене» шута илни кирлĕ. Бĕскен каласан, Америкăри предприятисен хуçисем хăйсен «союзникĕсен» таварĕсене çĕршыва кĕртес мар тесе, тариф тĕлĕшĕнчен тунă чăрмавсене тата ытларах тĕреклетме требовани лартаççĕ. Çав вăхăтрах, çакă паллă: США «союзникĕсем» çав чăрмавсене вăйсăрлатассишĕн çине тăраççĕ. Вĕсем «Пулăшу вырăнне суту-илӳ» текен лозунг кăларса тăратнă, мĕншĕн тесен «союзниксем» доллар дефицичĕ пирки питех те пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ. Лондонри «Экономист» журнал, тариф политикине асра тытса, çапла ыйту лартнă: çĕршывсем суту-илӳре конкуренци тунипе пĕр-пĕрне (тĕрĕсрех каласан пулсан, пĕри ыттисене.—И. А.) çаратнă чухне «çĕршывсем политикăпа çар союзникĕсем» мĕнле пулма пултараççĕ-ха?

Халĕ конкуренцишĕн пыракан кĕрешӳ (рынок пирки кĕрешни) ытларах та ытларах сивĕчленсе пырать. Ют çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, 1954 çулхи январь уйăхĕнче Сидней хулинче Британи империйĕнчи çĕршывсен конференцийĕ уçăлать. «Скотсмен» журнал çавна май çапла çырать: «Уайт холлра (Англи правительстви ĕçлекен çурт) çапла пĕлтереççĕ: конференция кун йĕркинчи тĕп ыйту... США-ри кризис пирки пулнă йывăрлăхсене хирĕç тăмалли план пулать. Вăл кризис тĕнчери ытти çĕршывсене те йывăрлăх кӳрет».

...Буржуалла «пророксем» 1953 çулта ĕçсем «чечекленесси» çинчен малтан палăртса каланă сăмахсене пурнăç сирсе ячĕ. Малашнехине палăртса каланă ытти сăмахсене илес пулсан, вĕсен кун-çулĕ паллă. Ли Сын Манна США-н тата унăн союзникĕсен бронированнăй дивизийĕсем çулталăк каярах ăçта пулнă, халĕ те çавăнта тăраççĕ. Демократиллĕ Корея Халăх Республики, унăн халăхĕ, штык вырăнне мăлатукпа плуг тытса, Америка агрессорĕсем аркатнă хăйĕн хулисемпе ялĕсене пысăк хастарлăхпа юсать.

Буржуалла «пророксем» малашнехине палăртса каланă сăмахсене пăхмасăр, 1953 çулта мир вăйĕсем çитĕнсем турĕç. Бу вăл, паллах, вăрçă вăйĕсене çĕнтернĕ, вăл вăйсем текех сук, тенине пачах пĕлтермест.

1953 çулта социализм лагерĕн—çĕр чăмăрĕ çинчи мирпе демократи тĕревĕн—çитĕнĕвĕсем ӳснипе пула, мир вăйĕсем тата ытларах тĕреклене. Капитал çĕршывĕсенче çывхарса килекен кризисăн паллисем палăраççĕ, производство чакса пырать е пĕр вырăнта тăрать, ĕçсĕрлĕх ӳссе пырать тата халăх массисем чухăнланса пыраççĕ пулсан, социализм лагерĕнче вара мĕнпур экономикăпа культура çĕлĕрен хăватлăн çĕкленет. Совет Союзĕнче, Китай Халăх Республикинче, мĕнпур халăх демократи çĕршывĕсенче 1953 çулта промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те питĕ пысăк çĕнтерӳсем тунă. Уйрăммăнах çакă паллă: 1953 çулта социализм лагерĕнчи çĕршывсенчен кашнинчах ĕççыннисем валли апат-çимĕç продукчĕсемпе промышленность таварĕсем питех те нумай парса тăрас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ.

Иртсе кайнан çулăн хăшпĕр итогĕсем çакăн пек ĕнтĕ.

ФРАНЦИРИ ПРЕЗИДЕНТ СУЙЛАВĔ

Декабрĕн 23-мĕшĕнче Францире президент суйлавĕ вĕçленнĕ. Паллă ĕнтĕ, Франци конституци тăрăх, президента парламентăн икĕ палатин—Наци пухăвĕпе (618 депутат) Республика совечĕн (315 советник) пĕрлехи пухăвĕнче суйлаççĕ. 13-мĕш хут сасăланă хыççăн, Франци президенчĕ пулма Республика совечĕн членне тата унăн вице-председательне Рене Котие суйланă.

Тĕнчери хаçатсем суйлав мĕнле иртни тата мĕнле вĕçленни çинчен çырнă чухне çакна паллă тăваççĕ: ун пек суйлав, унта хутшăннă кандидатсен хисепне тата вăл суйлав мĕн чухлĕ вăхăта тăсăлнине илес пулсан, Франци историйĕнче пулман. Чăнах та, суйлав çичĕ кун хушши пынă. 12 хутчен сасăлани усăсăр пулнă, мĕншĕн тесен вĕсенче кандидатсенчен никăшĕ те кирлĕ чухлĕ сасă—суррипчен ытларах—пухайман. 13-мĕш хут сасăланă чухне кăна «независимăй республиканецсен» ушкăнĕн кандидачĕ Р. Коти 477 сасă илнĕ. Ун чухне 871 бюллетене тĕрĕс тесе йышăннă.

Суйлав çавăн пек иртнине мĕнпе ăнлантарса пама пулать-ха?

Францири хаçатсем ăна çапла ăнлантарса пакраççĕ: президент суйлавĕ çавăн пек иртни çĕршыври лару-тăру питех те йывăр пулнинчен, тĕрлĕрен партисем хушшинче кĕрешӳ сивĕч пулнинчен килнĕ. Кĕрешĕвĕн тĕп сăлтавĕ Парижра тата Бонра тунă çар договорĕсем—«Европăри оборона пĕрлешĕвне» («Европа çарнĕ») тăвасси çинчен тăракан ыйту пулнă. Парижри хаçатсем суйлав пуçланиччченех çакна палăртнă: парламентăн икĕ палатин Версальре пулнă пĕрлехи ларăвĕнче «Европа çарĕ» майлă тăракансемпе ăна хирĕç пыракансем хушшинче кĕрешӳ пуçланса кайнă. «Европа çарне» туса гитлерла вермахта тепĕр хут ура çине тăратма шухăшлаççĕ.

Хаçатсем çакна палăртаççĕ: пуриччен ытларах «Европа çарĕ» майлă тăракан сыннăн—Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн Жорж Бидон, президент пулма хăйĕн кандидатурине тăратнăскерĕн—иккĕмĕш хут сасăланă хыççăн хăйĕн ятне кандидатсен списокĕнчен кăларма тивнĕ, мĕншĕн тесен унăн кандидатури путланса ларнă. Радикалсен кандидатнĕ Ивон Дельбосăн та çавăн пекех пулса тухнă. «Либерасьон» хаçат ун çинчен çапла çырнă: «Дельбосăн ĕçĕ ăнăçлă пулманнине... вăл питех те Европа çарĕшĕн тăнипе тата Америка майлă шухăш-кăмăл тытнипе ăнлантарса пама пулать».

Францин хальхи премьер-министрĕн Ланьелĕн кандидатури вунă хутчен баллотировкăра пулнă. Анчах вăл çĕнтерӳ тума пултарайман, вунпĕрмĕш хут сасăлас умĕн унăн хăйĕн ятне кандидатсен списокĕнчен кăларма тивнĕ. «Юманите» хаçат кун пирки çапла çырнă: «Бермуд утравĕсем çинчи канашлăва хутшăннă Ланьель кандидатурине, вăл хытă çине тăнă пулин те, йышăнман». Ланьель поражени тӳсни «Европа çарĕ» майлă тăракансем йывăрлăхсемпе тĕл пулни çинчен калать, тесе паллă тăвать хаçат.

Паллă ĕнтĕ, Францири социалистсен партийĕнче «Европа çарĕ» çинчен тăракан ыйту тăрăх пысăк хирĕçӳсем пур. «Европа çарне», уйрăммăн илсен, çак партин руководителĕ Молле хӳтĕлет. Çавăнпа та социалистсем хăйсен кандидачĕ пулма ăна мар, партин тепĕр лидерне—Нежлена тăратнă. Нежлен Парижра тата Бонра тунă çар договорĕсене хирĕç пĕр хутчен кăна мар тухса каланă пулнă.

Францири Коммунистсен партийĕ президент суйлавĕнче мĕнле позици тытса пынине партин парламентри ушкăнĕ хăйĕн пĕлтерминче палăртнă. Пĕлтерминче, уйрăммăн илсен, çапла каланă: «Коммунистсем «Европăри оборона пĕрлешĕвне» хирĕç тăнине кăтартса панă тата хăйĕн кандидатури таçра парламент палатисенчи членсен ытларахăшне пĕрлештерме пултаракан республика деятелĕшĕн сасăлама хатĕр».

Коммунистсем, паллă ĕнтĕ, малтанхи хут сасăланă чухне хăйсен кандидачĕшĕн—Марсель Кашеншăн сасăланă. Пĕрремĕш хут сасăланă хыççăн Кашен вырăнне Нежлен кандидатуришĕн сасăланă.

Суйлав вĕçленнĕ. Франци государствин пуçлăхĕ пулма Р. Котие суйланă. Суйлавăн юлашки итогĕсене хак парса, «Юманите» хаçат çапла çырать: «Версальри суйлав хальхи историйĕн тапхăрĕ пулса тăрать. Суйлавра никам иккĕленме пултарайман политикăлла чăнлăх палăрнă: «Европа çарĕ» текенскерне хирĕç пыракан хăватлă юхăм мĕнпур çĕршывĕпе ӳсĕмĕн ӳссе пырать. «Европа çарне» хирĕç пыракан çак юхăм, класс интересĕсем (вĕсене наци интересĕсенчен çӳлĕрех вырăна хураççĕ) кăларса тăратакан пăя пĕтĕмĕшпех çапса хуçма çителĕксĕр пулнă пулин те, Бонра тата Парижра тунă договорсене çĕнĕрен пырса çапнă».

Çĕнĕ президент виçĕ эрнерен ĕçлеме тытăнать. Ун хыççăн правительствăн, тахçантанпа йăлана кĕнĕ йĕрке тăрăх, отставкăна тухмалла, президент çĕнĕ премьер-министра палăртать. Анчах Наци пухăвĕ кăна премьер-министр кандидатне çĕнĕ правительство йĕркелеме татăклă право парать. Çавна май хаçатсем: тепĕр виçĕ эрнерен Францире правительство кризисĕ пуçланĕ, тесе çыраççĕ.

И. АРТЕМОВ.

Совет Союзĕпе Монголи хушшинчи суту-илӳ çыхăнăвĕсем çинчен

СССР Тулашри суту-илӳ министерствипе Монголи суту-илӳ делегацийĕ хушшинче пуçлă калаçусем пулса иртнĕ хыççăн, декабрĕн 26-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Монголи Халăх Республики 1954 çулта пĕр-пĕрне таварсем парса тăрасси çинчен пулă Протокол çине алă пуснă.

Протоколпа Совет Союзĕпе Монголи хушшинчи суту-илӳре таварсене пĕр-пĕрне парса тăма палăртнă. Совет Союзĕ Монголи Халăх Республикине хуçалăх валли промышленность таварĕсемпе тата апат-çимĕç таварĕсем, вăл шутра: пир-авăр, пурçăн тата çăм пир-авăр, сахăр, çăнăх, çавăн пекех нефть продукчĕсем, автомашинăсем тата оборудовани парса тăрать. Монголи Халăх Республики Совет Союзне выльăх-чĕрлĕх, çăм, услам, тир-сăран, чĕрт-авăрĕ тата ытти выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парать.

Протокол çине çаплах алă пуснă: Совет Союзĕ енчен—Тулашри суту-илӳ министрĕн ĕçĕсене тăвакан С. А. Борисов, Монголи енчен—Суту-илӳ министрĕ Н. Батор.

Китай Халăх Республикинче пур çĕрте те халăх власĕн органĕсене—халăх представителĕсен пухăвĕсене суйлаççĕ. Çак суйлавсем—çĕршывра пĕрремĕш хут ирттерекен пурне те, тивĕç суйлавсем. Китайри хаçатсем суйлава питĕ нумай çын хутшăнни çинчен çыраççĕ. Активистсем — миллионшар çын ăнлантару ĕçне туса пыраççĕ

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ. Дайрен хулинчи рабочисем пурăнакан кварталта суйлавçăсене регистрацилеççĕ.

Синьхуа агентствин фотоӳкерчĕкĕ.

Китай халăхĕн çĕнтерĕвĕ

ПЕКИН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Женьминьжибао» хаçат паян «Пирĕн çĕршыври промышленность строительствинчи пысăк çĕнтерӳ» ятлă уместатьяра çапла çырать: «Аньшаньри металлурги комбинатĕнчи виçĕ пысăк предприятие туса пĕтерни тата ĕçе яни пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕнче Китайри йывăр промышленноçа аталантарас ĕçре паллă событи тата çĕршыва социализмла индустриализацилес ĕçре пысăк çĕнтерӳ пулса тăрать».

«Çак виçĕ предприятие ăнăçлă туса пĕтерни,—кăтартса парать малалла хаçат,—Китайпа совет халăхĕ хушшинчи аслă туслăхăн результачĕ пулса тăрать. Çак предприятисен проектне тăвас ĕçе, строительствăпа монтаж ĕçĕсене, оборудовани сăнаса пăхас тата предприятисене хута ярас ĕçсене Совет Союзĕ пулăшнипе пурнăçланă. Совет Союзĕ чи чаплă техника оборудованийĕ пачĕ, инженерсемпе техниксем нумай хатĕрлерĕ. Унсăр пусне, вăл пире предприятисенче ĕçлекенсен кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе те пулăшрĕ. Экономикăпа техника тĕлĕшпе çакăн пек нумай енлĕ тата ырă кăмăлпа пулăшу пани тĕнче историйĕнче халиччен пулман».

Китайри Коммунистсен партийĕпе председатель Мао Цзе-дун палăртнă генеральнăй çул-йĕр Китай халăхне çĕршыва социализмла индустриализацилессине пурнăçламалли çула маяк пек çутатса парать. Китай халăхĕ çав çулпа пырать. Çĕршыва социализмла индустриализацилессине пурнăçласа пынине пула Совет Союзĕ тăванла, ырă кăмăлпа пулăшнине пула, çак предприятисен строителĕсен коллективĕ паттăррăн ĕçленине пула тата пĕтĕм Китай халăхĕпе Китай рабочийĕсем Аньшаньри комбинатăн заказĕсене вăхăтра пурнăçласа пулăшу панине пула, Аньшань комбиначĕн предприятийĕсене кĕске вăхăтра туса пĕтерне.

Чехословаки халăхĕн ĕçри çитĕнĕвĕсен çулĕ

ПРАГА, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). 1953 çулта Чехословаки социализм строительствин çулĕпе ăнăçлăн малалла пынă. Çĕнĕ электростанцисем тунипе пула тата кивĕ электростанцисене çĕнетсе улăштарнипе пула, энергетика базин сарăлса пынă. Словакире, сăмахран, Добшински, Оравски, Новоместки гидроэлектростанцийĕсене ĕçе янă. Ваг юханшывĕ çинчи Горни-Стрела гидроэлектростанцине тунă çĕрте, «Çамрăксен пĕви» çинче пысăк ĕçсем туса ирттерне.

Влтава юханшывĕ çинчи Сланцки электростанцийĕнчи монтажниксем пĕрремĕш агрегата вырнаçтарса лартаççĕ, ăна çитес çулта ĕçе ямалла.

Словакие индустриализацилесси пысăк хăвăртлăхсемпе пурнăçа кĕрсе пынă. Словакири промышленность производствин калăпăшĕ кăçал 1937 çулхипе танлаштарсан, 4,5 хут ӳснĕ.

Туслăх çулне тăвас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕ. Вăл çул Тиса çинчи Черны хулинчен пуçласа пĕтĕм Словаки урлă тăсăлать. 1953 çулта икĕ линиллĕ çĕнĕ чугун çул туса пĕтерне. Вăл Брно хулине Гавличковы Бродпа çыхăнтарать. Çак çулăн тăршшĕ 120 километр. Жилинăпа Кошица хушшинчи чугун çула электрификацилеме пуçланă.

Совет Союзĕнчи производство новаторĕсен ĕç меслечĕсемпе усă курни те Чехословакири ĕççыннисене çитĕнӳсем тума чылай пулăшнă. Халĕ çĕршыври хурçă шăратакан мĕнпур рабочисем Совет Союзĕнчи технологи нормисем тăрăх ĕçлеççĕ. Совет Союзĕнчи «Донбасс» ятлă çĕр кăмрăкĕ кăлармалли комбайн евĕрлĕ туса 1953 çулта Чехословакире «Острован» ятлă çĕр кăмрăкĕ кăлармалли комбайн тата шахтăсенче çул чавмалли комбайн туса кăларнă.

Кăçал çĕр кăмрăкĕ кăларасси чылай ӳснĕ. Нефтяниксем те пысăк çитĕнӳ тунă. Вĕсем нефть кăлармалли пилĕк çуллăх плана темиçе уйăх маларах тултарнă.

1953 çул Чехословакишĕн çакăнпа паллă: вăл пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн юлашки çулĕ пулса тăрать. Декабрĕн 23-мĕшĕ тĕлне 2.500 предприяти ытла хăйсен пилĕк çуллăх планĕсене тултарнă ĕнтĕ.

Капитализмла Чехословакире пулнă чи пысăк производство шайĕнчен кăçал икĕ хут иртсе кайнă.

1953 çулта Чехословакире производство хатĕрĕсем туса кăларасси пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пынă. 1948 çулхи промышленность производствин пĕтĕмĕшле калăпăшĕнче производство хатĕрĕсем 56 процент йышăннă пулсан, 1953 çулта вăл 63 процента çитнĕ.

Промышленность енĕпе тунă çитĕнӳсем Чехословакири Коммунистсен партийĕпе правительствине кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа промышленность тата апат-çимĕç таварĕсен вакăн сутмалли государственнăй хакĕсене чылай йӳнетме май пана.

Чехословакири ĕççыннисем çĕнĕ çула хуçалăхпа культура строительствин мĕнпур участокĕсенче чылай пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

АЛБАНИРЕ ВЫРĂНТИ СОВЕТСЕН СУЙЛАВНЕ ИРТТЕРЕÇÇĔ

ТИРАНА, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Албани Халăх Республикин Халăх пухăвĕн Президиумĕ 1954 çулхи мартăн 7, 14, 21 тата 28-мĕшĕсенче ялсенчи, хуласенчи, локалитетсенчи, районсенчи тата облаçсенчи халăх совечĕсен суйлавне ирттерме йышăннă.

Англири хаçат США-па Пакистан хушшинчи çыхăнусем çинчен

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Обсервер» хаçатăн Карачири корреспонденчĕ, Америка çитес çулта Пакистана çар ĕçĕ валли укçа уйăрса парасси çинчен пĕлтерсе, çапла çырать: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Пакистанран Российмăна хирĕç тăракан вăтам-хĕвелтухăç оборонин (Вăтам Хĕвелтухăçĕнче тума палăртакан çар блокне хаçат çапла ят панă.—Ред.) тĕрекĕ туса хума шутлани пирки халĕ иккĕленӳ пулма пултараймасть».

ПАРИЖ, декабрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви, «Обсервер» хаçатăн дипломатилле корреспонденчĕ пĕлтерĕвĕ тесе, çапла çырать: Америка Пакистанри хĕçпăшаллă вăйсене тĕреклетме шутланă пирки Англири общественность хытă тарăхать.

АМЕРИКА ПАКИСТАНА ПАРАКАН «ПУЛĂШУ»

КАРАЧИ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Ииров» хаçатăн корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: США правительстви Америкăн техникăлла пулăшăвĕн програми тăрăх 1954 çулта Пакистана 20 миллион доллар парасси çинчен решени йышăннă.

НОРВЕГИРИ ЛЕТЧИКСЕН УШКĂНĔ АМЕРИКĂРИ ТЕХАС ШТАЧĔН ХИСЕПЛЕ ГРАЖДАНĔ ЯТНЕ ЙЫШĂНМАН

ОСЛО, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Норвегин чылай летчикĕсем, вăрçă хыççăн Техас штатĕнче (США) вĕренекенскерсем, «Техасăн хисеплĕ гражданĕ» ятне тата «хисеплĕ граждансен» илнĕ. Халĕ летчиксенчен 13—15 çын çак граждансене Америка власĕсене кадала тавăрса панă.

Хаçат пĕлтернинчен çакă курăнать: Норвегири летчиксем Техас штачĕн хисеплĕ гражданствине США-ра прогрессивлă деятельсене хĕсĕрленине хирĕç протестлесе палăртса йышăнман.

ФРАНЦИРИ ХАЛĂХ ЙЫШĔ

ПАРИЖ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Статистикăпа экономикăн Наци институчĕн сведенийĕсем тăрăх, Францире хальхи вăхăтра 43 миллион çын шутланать.

ЯПОНИРИ ХАЛĂХ ЙЫШĔ

ШАНХАЙ, декабрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Японири «Нихон Нишиен» хаçат, министрсен кабинечĕ çумĕнчи статистика бюровĕ пĕлтернĕ тесе, çакна кăтартса парать: кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Японире халăх йышĕ 87.033 пин çын пулнă.

Пархатарлă ĕçре

ШИШЕН. Сатра Мăрзари пуçламăш шкулăн калиа çулах вукшар ача вĕренсе тухать. Çак шкулта ĕçлекен Иван Христофорович Христофоров учитель тăван çĕршыври çамрăк ăрăвне воспитани парас тĕлĕшпе ырри-ханин ĕçлет.

Вăл шкулта ĕçлеме пуçланăранпа ĕнтĕ 56 çул тултарчĕ. Çак хушăра çĕршер çамрăка вĕрентсе кăларнă. Вĕсенчен нумайăшĕ аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Халĕ чылайăшĕ учительсемпе врачсем, агрономсем, летчиксем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен учителĕпе çыхăну тытаççĕ. Иван Христофорович патне Мускавран, Владивостокран, Севастопольтен, Хусантан, Шупашкартан—çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те çырусем килсе тăраççĕ. Кашниех хăйĕн ватă учительне ăшшăн саламлать. Иван Христофоровичăн пархатарлă ĕçне шута илсе, СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ ăна Ленин орденĕпе наградăланă.

Хоккей

РСФСР кубокне илессишĕн

Иртнĕ вырсарникун Шупашкарти «Энергия» спорт обществин стадионĕнче Ока çинчи Павлово хулинчи (Горький облаçĕ) тата Шупашкарти «Спартак» спорт обществисен хоккей командисем хоккей вăййипе РСФСР кубокне илессишĕн тĕл пулса вылярĕç.

Вăйă интереслă пулчĕ. Пĕрремĕш таймра Шупашкарти спартаковецсем, вăйлă тапăнса выляса, хăнасен алăкне икĕ мечĕк кĕртрĕç. Кун хыççăн хăнасем активлăрах, тăрăшса выляма тытăнчĕç, вăйă пĕтиччченех пуçарулăха хăйсен аллинчен вĕçертмерĕç. Чăсах вĕсем икĕ мечĕк кĕртрĕç.

Иккĕмĕш таймра хăнасем тата тăватă мечĕк çапса кĕртсе, Шупашкарти спартаковецсене 6:2 шутпа çĕнтерчĕç.

Çапла вара, Шупашкарти «Спартак» спорт обществин команди хоккей вăййипе РСФСР кубокне илессишĕн пыракан малаллахи ăмăртусенчен тухса ӳкрĕ.

Иртнĕ вырсарникун çавăн пекех хоккей вăййипе хула кубокне илессишĕн пыракан ăмăртăвăн черетлĕ вăййи пулса иртрĕ. Чапаевски поселок команди тата энерготехникум команди тĕл пулса выляреç. Вăйă Чапаевски поселок командин çĕнтерĕвĕпе вĕçленчĕ.

• • •

«Искра» спорт обществи хăйĕн членĕсем хушшинче йĕлтĕрпе ярăнас енĕпе классификациллĕ ăмăрту ирттернĕ.

Суд

Бандитсене тивĕçлипе айăпланă

Федор Дмитриевич Молчанов вăтăр çулти сывă та кĕрнеклĕ çын. Вăл техникумра вĕренсе специальность илнĕ. Анчах тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пурăнма шутламан, тĕттĕм кассенче çынсене кинжалпа хăратса çаратас çул çине тăнă. Вăл бандитсен ушкăнне тунă. Иртнĕ кĕркунне Ф. Молчанов Шупашкарта Шкурин гражданина тапăнать, ăна кинжалпа хăратса укçине кăларса илет. Çав каçхинех Разин гражданина кинжалпа чиксе суранлатать.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче каçхине Ф. Молчанов хăйĕн тусĕпе В. Пономаревпа пĕрле Сосновка поселокĕнче Алексеева гражданкăна тапăнать. Бандитсем ăна кинжалпа чикеççĕ те пальтоне хывса илеççĕ.

Тивĕçлĕ органсем тăрăшнипе бандитсене çав каçхинех тытса арестленĕ.

Декабрĕн 25—26-мĕшĕсенче çак бандитсен ĕçне Чăваш АССР Верховнăй Сучĕ пăхса тухрĕ. Сул председателĕ В. Павлова, заседателĕсем Анисимовпа Афанасьев, айăпланакане республика прокурорĕ Н Сидоркин пулчĕç.

Нумай свидетельсем кăтартса панипе кура айăпланакансем хăйсен бандитлă ĕçĕсене тунаймарĕç.

Верховнăй Сул Ф. Молчанова 25 çула, В. Пономарева 15 çула тĕрмене хупса лартмалла, унтан тухсан пилĕкшер çул сасă прависĕр хăвармалла туса приговор йышăнчĕ.

Сул иттеме пынă ĕççыннисем Верховнăй Судăн приговорне ырларĕç.

Пĕлтерни

Декабрĕн 29-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче политикăлла экономие вĕренекенсене валли лекци пулать. Лекци теми: «Таварлă производство. Тавар тата укçа» (иккĕмĕш лекци).

Лектор Я. Г. Железнов юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—декабрĕн 29-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Вырă тухă»; декабрĕн 30-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Не называя фамилий».

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА» — декабрĕн 29-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре вăрăмăшлă илемле фильм «Высокая награда», ытти сеансенче — «Васса Железнова».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 3. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—5-17, ответственнăй секретарь—3-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—18-67, партийнăй пурнăç пайĕ—3-90, [illegible] пайĕ—5-54, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—6-60, культура пайĕ—6-51, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-52, издательство конторĕ—9-23.

НТ 03431 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 3037. Тираж 26.000 экз.